Уйрӑм шурнал хакӗ — 30 пус.

# СУНТАЛ

Ҫӑваш пролеттари писсаттӗлӗсен „Канаш“ сойусӗн литтераттурӑ, криттӗк, политтӗк тата наукӑ шурналӗ

№ 6 (36)

ИЙУНЬ—1927 ҫул.



„Канаш“ сойусӗн виҫҫӗмӗш сиесӗн преҫитиумӗ.

**Лараҫҫӗ:** (сулахайран сылтӑмалла) Солӑттӑв А., Ҫеливановский, Шупуҫҫынни Н.

**Тӑраҫҫӗ:** Танилӑв М., Петтокки.

*ВИÇÇĔМĔШ ÇУЛ ТУХАТ̆.*

*Пĕтĕм тĕнђери пролеттарисем, пĕрлешĕр!*

Уйăхра пĕрре тухат̆.
**ХАКĔ:**
пĕр уйăха — 20 п.
3 уйăха — 60 п.
6 уйăха 1 т. 10 п.
1 çула 2 тенкĕ
**Ретакси атрĕсĕ:**
Чебоксары, Канашская ул.
дом Совдепа № 15.
Телефон № 47.

# = СУНТАЛ =

**Ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен „Канаш“ сойусĕн литтераттурă, криттĕк, политтĕк тата наукkă шурналĕ**

„КАНАШ“ ХАÇАТ ÇУМĔНЂЕ ТУХАТ̆.

**№ 6 (36)**
ИЙУЊ
**1927 çул.**

# ХУРИЙАЉ.

Хурийал—аслă йал. Хурийаљĕн тăвată урамĕ Ампу тăвĕ айккипе тăвată çĕлен пек ђăсăлса анса, Хури шывĕ урлă каçса кайаççĕ те, тата икĕ урам, турђка пек кукăрăлса ўкеççĕ. Урас тăвайккинђен хăпарнă ђух, хăпарнă майĕпе малтан, шур кĕпе çухавĕнђен пуç курăнса тăнă пек, Хурийаљ ђиркӳн тăрри курăнса кайат̆. Тăррине хăпарса çитсен, есĕр шапшур ђиркĕве пĕтĕмпех куратăр. Тата унтан анатарах—кăвакрах тĕксĕм лаптăк сарăлса выртнине курма пултараттăр. Куçăрсем виттĕртерех пулђђăр анђах, тата çуллахи çутă кун пултăр. Йулашки çулсенђе, ђăнах та, сарламан пирки, Хурийаљ ђиркĕвĕ те ĕлĕкхи пек çуталсах лараймаст̆. Ăна тĕксĕм сăн çапат̆, унăн тăрри те ĕлĕкхи пекех йалтăртатмаст̆, тутăх хăйĕннех тăват̆. Хурийаљне çитесси тепĕр вун çухрăм ытла та пулин те, вырсарни кун йе урăх праçник кунĕ çул çӳреме тĕл килсен есĕр Хурийаљ ђиркӳн ђанĕ сассине илтме пултаратăр. Çавăн тĕрлĕ хытă йантăрат̆ Хурийаљ пысăк ђанĕ. Кам тивлеђĕпе Хурийаљ ђиркĕвĕ çав ђанпа пĕтĕм таврана йантратса махтанат̆, тесе пĕлетĕр есĕр? Кирек-камĕнпе пултăр, ман мĕн ĕç пур унпа, темесĕр хăварас çук ĕнтĕ вулакан. Маншăн хамшăн та вăл çаплах. Анђах пирĕн аслатте апла ăслă марђђĕ, унăн шухăшĕсем пĕтĕмпех урăх йӳп тăрăх çӳретђĕç. Вăл вара кирек-хăçан та Хурийаљ ђиркĕвĕ патĕнђен иртсе кайнă ђух, çын пытарнă ђаплă карталанă шăтăксене кăтартса:—Кунта пађăшкăпа йунашар Раман Петравиђăн ашшĕ Петр Митриђ выртӑт, амăшне те çакăнтах пытарнă, теççĕ, çав пысăк ђана вăл илсе панă, вĕт, тетђĕ сассине темле аслă çынпа калаçнă пек туса. — Халăх хăранă та унтан, хисепленĕ те ăна,—тетђĕ кăшт ват сывлăшне çавăрсан.

Ђиркӳ йенђен пырса кĕрсен, сылтăм йенђе пађăшка çуртĕнђен катарах та мар, шкул ларнине те курса кайатăр. Шкул вара шĕп-шĕвĕр шĕлепкине кăшт айакалла ђалăштарса лартнă. Ĕлĕк ђиркӳ шкулĕ пулнăскер пулмалла та, пит киђем тĕксĕм вара, манах пек ларат̆. Ђӳређи харшисене хура сăрăпа сăрланă.

Хаљ шкул унта мар, теççĕ никак. Пађăшки, ĕлĕк налук таврашĕ курманскер, аслă пӳртĕнђе сарăлса пурăннăшăн налук иле пуçласассăн, пуйан Арт̆ишăн пушă ларакан пӳртне куçнă, тет те, çавăнпа вара шкул пуп çуртĕнђе пулас пулат̆. Çавăнпа та ађасем «вырăс карĕ те вырăн йулђĕ» тес вырăнне „вăрăм çӳç карĕ те вырăн йулђĕ“, теççĕ. —Калаçма çук çав хаљхи ађапђапа, пађăшкана та хисеплемеççĕ те вĕсем, ăçтан ĕретлĕ çын пулђђăр,—текелеççĕ вара ăна илтсен ватăрах хĕрарăмсем. Раман Петравĕђ илтсен, пĕрре кутран тапмасăр та, йе хăлхаран пăрмасăр та ирттерсе йарас çук.—Е-е, йăтă ăрăвĕ!—тенĕ пулĕђђĕ вăл. Çав тĕрлĕ пупсемшĕн Раман Петравăђ. Пупĕсем те Раман Петравăђпа туса-тусăнах пурăнаççĕ çав. Вырăссем «пулăçă пулăçа инçетрен курат̆», теççĕ, ђăвашсем «кашкăра кашкăр шăршĕнђенех пĕлет», теççĕ. Тен тата авантарах халлап та пулĕ кун йышши. Пирĕн ват аслатте нумай пĕлетђĕ ун пек йумах-халапсене, кашнă сăмахра, тенĕ пекех, унăн хăйĕн халлапĕ пурђĕ. Сăмах та унăн питĕ çавăрнăçуллă тухат̆ђĕ, шыв пек йухат̆ђĕ. Вĕренсе йулаймарăм çав вилиђђен. Вĕренес тесен, хаљ те нумай таха ун пек стариксем, вĕренейместпĕр. Ђăваш ђĕлхин праçникĕ хăçан çаврăнса çитĕ.

Вăрçăђђен нумай малтан. Хурийаљне пысăкрах шкул уçас, тесе килкелесе те пăхнă, тет. Пĕр виç теçеттин çĕр анђах памалла пулнă, тет. Анђах халăх вĕренсе ăсла тухасран хăранипе, Кармăксем йышши йал кашкăрĕсем: çав шкулшăн хаљ те çĕр çук çĕртен тата пустуй виç теçеттин парса сайа йамаллаи ,тесе халăха пăтратса, çав ĕçе пӳлсе хунă, тет.

Шалалла кĕрсе пăхсассăн та, Хурийаљĕн ытти ђăваш йалĕсенђен уйрăмми нимех те çук. Урам икĕ йенĕпе, кашта çинђи ђăхсем пек, ђăваш пӳрт çурђĕсем ларса тухнă. Анаталла аннăçемĕн урам икĕ йеннипе лартса тухнă йăвăçсем нумайлансах пыраççĕ. Хури тăрăх çулла вара йешĕл симĕс вăрман ђăсăлса выртӑт. Вăл авалтан ӳсекен вăрман мар, етем аллипе лартса тухнă йăвăçсем. Çуркуннехи ирхине кураксем ахăрни катаранах илтĕнет вара, Нурăс пасарĕнђен пĕртте кайа мар. Нурăс пасарĕ кĕрленине илтни есĕр? Илтмен пулсан, сирĕн Кавал пасарĕ, йе Йухма, йе Шăхасан, йе Есмел пасарĕ пур. Патнерех пырсан — камăн куçĕ савăнмĕ, камăн ђĕри ăшшăн тапмĕ, камăн кăмăлĕ çемçелмĕ? Йăмрасен симĕс пуçĕсене такам сарă пурçăнпа карса илнĕ пек, сапсар кăђăкă. Сар кăђăкăсем çинђе миçе пин вĕлле хурђĕши? Сăр-сăр-сăр туса анђах ларат̆ йăмралăх. Куракесем шавлани, хуртсем сăрлани ђуна йурлаттарат̆, çуркуннехи сапсар хĕвел виттĕр илсе ђĕрене, ăвăс пек, шăратӑт.

Хурийаљне айакран пăхсан, вăрман тейĕн çав.

Хушшине кĕрсен, йăвăçсем айĕнђе çуртйĕрсем тĕрли куçа ӳкет.

Ак мĕлкеллĕ пуçне уснă пĕђђен пӳрт ларат̆. Килкартинђе икĕ ђăх çӳрет. Анкартипе килкартине те пĕлес çук кунне, кайра çурт йĕр çук, малта та вĕрлĕксемпе анђах карт̆алакаланă. Çурт вырăнĕ çарамас çын йевĕрлĕ çӳçенсе выртӑт. Кун йевĕрлисем татах та ђылай Хурийаљĕнђе.

Ватамрах тăпăрхаллă, ђăваш майĕпе, пырат̆, текен çуртйĕрсем ытлараххăн курăнаççĕ. Хăшĕн-хăшĕн ђӳређе йанаххисене тĕрлĕ сăрăсемпе сăрланă. Вăрăм шалђасем тăрринђе шăнкăрђ йăвисем çакăнса тăраççĕ. Ђĕпписене

сен аллинђи мул ӑҫтан тухса кайнине. Вӑт ҫапла пулнӑ вӑл ӗҫ, ађамсем.

Авал, хађхи пек мар, вӑрмансем аслӑ пулнӑ. Хађхи ҫӑкаллӑх, сар хурӑн, ђӑрӑшкуђӗ уйӗсем пӗтӗмпех вӑрман пулнӑ. Хам астӑвасса та нумай вӑрман пӗтрӗ, ну-



май хӑртса уй турӗҫӗ. Вӑрмансем ку ҫывӑхра пӗтсе хађ ҫитрӗҫ. Раман аслашшӗ Кармӑк старик ҫамрӑк ђух, хађхи усрав вырӑнӗнђе таркӑнсем пурӑннӑ. Таврари халӑх ҫав таркӑнсенђен нумай сӑтӑр курнӑ. Мӗн ђул ҫын ҫаратнӑ, темӗн ђул ҫын хурах пуснӑ, вӗлернӗ пулӗ вӗсем. Курак Ҫӗпритунӗсен аслашшӗне, Курак старикӗн малтанхи арӑмне те Кив йала кайнӑ ђух вӗсемех ҫирӗклӗхре вӗлернӗ, тетђӗҫ. Ун ђух вӑл кӗҫӗн ҫын пулнӑ. Тенкӗ тавраш унӑн нумай пулнӑ. Вӑл кайри хурӑнташран тавӑрӑннӑ. Каҫ пулса килнӗ тӗл пулнӑ пулмалла. Ӑна вара ҫав таркӑнсем пусмӑрласа, вӗлерсе, тенкисене сӳсе илнӗ, хӑйне ҫирӗклӗхри пусса ђул ҫыхса йанӑ

Ҫав таркӑнсене Кармӑк старик вӑрттӑн апатҫимӗҫ, сӑра тавраш тӑратса пурӑннӑ. Хурах пусас ӗҫре хӑй те пулкаланӑ пулмалла. Вӑл кайӑкҫӑ майӗпе ӗмӗрех вӑрман тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳренӗ. Таркӑнсем нумай кӗмӗл пуҫтарса ҫӗр айне пытарса хунӑ пулнӑ.

Вара пӗрре Кармӑкпа Йахрун старик, вӗсем ун ђухнех туслӑ пулнӑ, таркӑнсем ӗҫсе ӗсӗрӗлсен, вӗсене амађ парса вӗлерсе пӗтернӗ. Мӗн пур йун пурлӑхӗ вӗсен аллине кӗрсе ӳкнӗ. Кармӑксен пурлӑхӗ йунран пуҫланса кайнӑ, хурах пусса пуҫтарнӑ укҫапа пуйнӑ Кармӑк ӑрађӗ, ӑна авалхи вӑрмансем аван пӗлнӗ, пире ун ҫинђен ваттисем каласа хӑварнӑ.

Петӗр шухӑшӗ ҫав йӗрпех малалла пыраҭ.—

...Кармӑк ывӑлӗ Петӗр сутйере те ҫӳренӗ, ик-виҫ ӑстрӑм стришнара та тӑнӑ. Пӗрмай халӑх йунне ӗмсе пурӑннӑ. Унтан йал мар пӗтӗм вулӑс хӑраса тӑнӑ. Хурийалне вӑл хӑйӗн ҫирӗп аллине, тимӗр хӗскӗђ пек ҫавӑрса илсе, тытса тӑнӑ. Кирлӗ пулсан, вырӑс ђинавнӗксемпе хӑратнӑ.

Ђӑвашсене вырӑс ђинавнӗксем кирлӗ кирлӗмаршӑнах пӑрахса ҫаптарни, пӗкӗ шӑнкӑравӗ сасси илтсенех, урамра ђипер выђакан ађасем алӑк айне упаленеупалене тарса кӗни ытла нумайах та пулмасҭ, вӗт, вӑл.

Вӑл вӑхӑтра вырӑс ђинавнӗксен пусмӑрӗ тата хӑрушӑрах пулнӑ.

Вырӑс ђинавнӗкӗн хӑрушӑ мӗлки, Кармӑк петӗршӗн халӑха пусмӑрлас ӗҫре шанђӑклӑ йулташӗ пулса тӑнӑ. Хурийалшӗн Кармӑк Петӗрӗ турӑ та патша та хӑйех пулнӑ.

Ӗлӗк ҫӗр валеҫнӗ ҫӗрте те вӑл пуҫ пулса ӗҫленӗ. Пӗтӗм ырӑ тађка ҫӗре ҫавӑрса илсе, кирлӗ пулсан турта-турта илсе, хӑйӗн пысӑк ӑратнине туйантарнӑ. Ҫавӑнпа та ку тарандђен Кармӑк





**Хурайалӗнђи хресђен ҫурђӗсем.**

таврашĕ Хурийаљ ҫĕрĕ ҫинђе, мамăк тӳшек ҫинђе выртнă пек, савăнса ахрса выртат̆. Ҫавăнпа та Кармăк таврашĕ ҫуллен тырă туртат̆, ҫавăнпа та вĕсен икшер тырă ампарĕ, ҫавăнпа та вĕсен пурнăҫĕ тулăх. Теприн пур, вăл хыт ҫĕрне тем пек ђакаланат̆, ĕҫлемен мар, вăкăр пек ĕҫлет, ҫапах кĕлетсенђен ҫуркуннерех кушаккайăксем те сивĕнеҫҫĕ.

Раман ывăлĕ ашшĕне тивĕҫлех пулнă вара, ват ерешменĕ йал ҫине карнă картине ҫулран ҫул ҫирĕплетсе сарса пынă.

Ђухăнăн куҫҫулĕ Раман кĕсйине кĕмĕл те ылттăн пулса кĕрсе ӳкет.

Пур-ҫук тырру куланайпах ҫывхарат̆, анђах ађупђу, пур-ҫук выљăхђĕрлĕхӳ—пурте ҫиме ыйтаҫҫĕ. Ҫăккăр... ҫăккăр... ҫăккăр...

Раман патне ирĕксĕрех вилĕм урапа утатăн.

Сăмах каламалли ҫук, ђĕнменни лайăх. Вилĕ ҫăварна уҫсан та, Раманах ырла.

Апла пулмасан:

— Ман сан ваљљи ытлашши хатĕрлесе хуни ҫук. Ирĕк санра, илен-илместĕн, маншăн пĕрех, ман хырăм мар, санăн выҫă, мана та ахаљ туса паракан ҫук.

„Ирĕк“вара ирĕксĕрех илтерет. Кайран тара ӳкĕнетĕн.



## Ҫулахи канлĕ вăхăт.

Пирĕнашкалăн ҫиме ҫитмести—Рамансен куҫĕнђен пăх.—аман парат̆, анђах уншăн йе ану ҫинђи каљђуна ҫур хакпа пар, йе кайран пĕр пăт вырăнне икĕ пăт пар, Раман парат̆, анђах ăна ҫитес ĕҫ ҫинђе ҫур хакпах тыррине вăхăтра вырса пар, хăвăн хут̆ те кайа йулса ҫилпе тăкăнса кайтăр. Раман парат̆, анђах унăн сухине вăхăтра сухала, хăвăн хут̆ те кайа йултăр. Вăл ăна пĕлмест.

Раман парат̆, анђах малтан ăна ҫителĕклĕ, ђунĕ ҫемҫелиђђен ĕҫтернĕ пултăр.

Ђухăн илет. Пурнăҫ сакки хытă сак, ниҫта кайса кĕмелли те ҫук: хут̆ пуҫна майкăђа ђик, хут̆ Раман патне пуҫа усса кăсйуна ҫуттике ђиксе кай.

Патша куланайĕ, халăх пусмăрлăхĕн тӳлевĕ сан ҫине ҫăтса йарас пекех пăхса тăрат̆. Ун хыҫĕнђен уратник, касак—хăйĕн нăрт-нăрт мăнтăр пиђĕпе, аллинђи нухайккине ҫӳлелле ҫĕклесе ҫисе йарас пек тискеррĕн пăхат̆. Тӳлеймерĕн — пур пек йапалу ҫилпех вĕҫсе кайат̆.

Ҫапла Раман ĕҫне тусах, тырă вăхăтра акаймарăм. Раманăн тырă йăтăнса ларат̆, сан ҫилпе кат̆ăртатат̆... Раман ĕҫне тусах тырра вăхăтра илеймерĕм, пур ҫук тырă ҫил кулли пулђĕ...

Пĕр Раман аллине кĕрсен, ура ҫине тăрассине: «сыв пул», тесех хăварас пулат̆ вара. Ерешмен хăйĕн картине шалтан шалалла, шалтан шалалла туртат̆.

Хресђенĕн, сак пек хытă ҫĕр ҫинђе курăнакан ђăваш хресђенĕн, урараи ӳкесси йăвăри?

Выљăх ӳкети, килте ĕҫлекенпе сарăмсăр пулат̆и, йăвăр ҫул килети—пурте ҫавăнтах туртат̆. Усал куҫа курăнса килмест. Типĕ шар кĕтмен ҫĕртренех, ҫĕртен сиксе тухнă пек сиксе тухат̆, муталаса та тăкат̆

Ерешмен ăна кĕтсех тăрат̆...

Санăн пăђăртанса тухакан куҫҫуљуншăн ҫап-ҫутă ылтăнăн йăлтăртатат̆, санăн—ах, тени унăн ђĕрине сиксе култарат̆...

Ерешменсене пĕтерес пулат̆. Пусăрăннă халăха ура ҫине тăратас... Ҫил майлă вĕрет...

**Елтиван.**

# ЕПӖ КОМУНИСА ХӐТАРНИ.

Самар хулине ђехсем килнӗ вӑхӑталла, 1918-мӗш ҫулта ҫакӑн пек ӗҫ пулса иртрӗ.

Епӗ ун ђухне Овҫҫанккин хуттӑрӗнђе ӗҫлеттӗм. Вӑл мана шалу укҫине питӗ сахал парат̆ђӗ. Апат та нађарђђӗ—тиӗ ҫӑкӑрпа какайсӑр шӳрпе кӑна куркаласа ҫиеттӗм. Епӗ автансем авӑтсан тӑраттӑмђђӗ те, сӗм тӗттӗм касђенех ӗҫлесе ҫӳреттӗм. Ҫӗрле хам айа ҫӗтӗк-ҫурӑк хурса выртаттӑмђђӗ. Ҫак Овҫҫанккинтан епӗ питӗ тарӑхаттӑм. Мана вӑл лаша вырӑнне хурсах ӗҫлеттеређђӗ.

Пӗрре ҫапла, кӗркунне, шинел тӑхӑннӑ салтак пырса кӗђӗ те, ӗҫлеме кӗрессӗн хуҫаран ыйтса пӑхрӗ. Хуҫа ӑна ҫапла каларӗ:

—Есӗ питӗ типпӗм, сан пек ӗҫлекенсем мана кирлӗ мар.

—Мӗнле ӗҫлекен кирлӗ вара сана?—тесе ыйтрӗ салтак.

—Мана сывлӑхлӑ ӗҫлекен кирлӗ, мӗншӗн тесен, манӑн ӗҫсем йӑвӑр—терӗ.

—Апла пулсан йурӗ. Ҫапах есӗ мана ху патӑнта пайанлӑха та пулин вырттарха. Ыран епӗ каллех мамалла уттарӑп,—терӗ салтак.

—Йурӗ, — терӗ те ӑна хирӗҫ Овҫҫанккин, ҫавӑнтах мана кӑшкӑрса илђӗ:

—Тарйе! Кӳртха ҫак сынна, ҫитер, ӗҫтер!—терӗ.

Салтак тенкел ҫине ларђӗ те, йӑл кулса илђӗ:

—Сывӑнха, Тарйе? терӗ.

– Сывӑ та ха, кулмастӑна есӗ?—терӗм.

—Сана Тарйе тесе ђӗнеҫҫӗ иккен?—терӗ салтак. Хӑй каллех кулђӗ.

—Тата мӗнле ђӗнђђӗр?—терӗм. —Манӑн йат ҫапла.

—Ђӗнме тӗрлӗрен ђӗнеҫҫӗ: хӑшне Тарйе теҫҫӗ, хӑшне Тарйа Иванӑвна теҫҫӗ!..

Пикенђӗ хайхи мана йӗкӗлтеме. Епӗ ӑна ҫитертӗм те, манӑн ӗҫлеме кайма вӑхӑт ҫитрӗ. Салтак мана нимпе те йамаст̆. Мӗнле апат ҫийен, тет, шалу мӗн ђухлӗ илетӗн? тет. —Пурне те ыйтат̆. Урӑхла пурӑнассу килмести, тет. Епӗ ӑна хирӗҫ: капла та аван, тесе каларӑм. Салтак ҫавах мана йарасшӑн мар. Есӗ революци ҫинђен илтнӗи?—тет.

Каларӗ, каларӗ те, епӗ хӑлхасене уссах итлеме пуҫларӑм. Кӗлӗре тӑнӑ пек тӑратӑп. Хам саппунпа куҫсене шӑлатӑп. Пӑхрӑм та—Овҫҫанккин алӑкран кӗре парат̆. Мӗн пур вӑйӗпе сасартӑк кӑшкӑрса йађӗ.

—Тарйе, ӗҫлес пулат̆! Сысна шӑвар та, тата улма нӳхрепе йатмалла пулат̆!—тет.

Овҫҫанккин кайсанах салтак мана каллех ђарђӗ:

—Усал иккен санӑн хуҫу? Хӑрарӑни?—тет. Кулат̆ вӑл манран, епӗ хам та темрен кулатӑп. Ҫапах, тухас килмесӗрех, салтака пӑрахса тула ӗҫлеме тухса кайрӑм. Ӗҫленӗ ђухне салтак каланӑ самахсем шухӑшран та каймаҫҫӗ. Революци ҫинђен шухӑшлатӑп. Хуҫа ҫине ҫилленетӗп. Тарӑхнипе хуҫа вырӑнне сыснине хытах урапа тапрӑм. Мӑн сыснине тапнинӗ Овҫҫанккин курах кайрӗ:

—Мӗншӗн сыснана тапатӑн? Вӑл халӗ пӗтӗ вӗт. Ах мушшелнӗк!—тет. Епӗ сысна ҫине те, хуҫана та пушшӗ ҫилентӗм. Тӗттӗм пулсан пуҫтарса пӗтертӗм те хам кухђӑна кӗретӗп. Салтак унтах ларат̆. Каллех вӑл манпа калаҫма тапратрӗ:

—Йепле епӗр, нумай ӗҫлесе те хавасланаймастпӑр. Хамӑр хуҫасем йепле лайӑх пурӑнаҫҫӗ. Ку тӗрӗс мар вӗт. Комуниссем ун пек пурӑнаҫа пӗтересшӗн тӑрӑшаҫҫӗ—тет.

Ҫак вӑхӑтрах хуттӑра иккӗн йуланутсемпе пыђӗҫ те, тӳрех хуҫа паккуйне кӗрсе кайрӗҫ. Вара кӑшт тӑрсанах хуҫа мана ђӗнсе илђӗ:

—Тарйе, сӑмавар ларт,—терӗ.

Хуҫа паккуйне епӗ сӑмавар илме тесе кӗтӗм те, иккӗн, пӑшалласкерсем, лараҫҫӗ, темшӗн ман ҫине пӑхса кулаҫҫӗ. Сӑмавар илсе алӑђ хыҫне тухрӑм та епӗ, ман хыҫҫӑн хуҫа та тухрӗ. Мана аларан тытрӗ те вӑл ҫапла каларӗ:

—Хайхи каймарӗн?--терӗ.

—Ҫукха, пӳртрех ларат̆ха--терӗм.

—Ҫывӑрат̆и вӑл?—терӗ каллех.

—Ҫукха, ҫывӑрмаст̆—терӗм.

—Есӗ ӑна ан йар, кӑмака ҫине ҫывӑрма вырттар—терӗ мана хуҫа.

Ҫапла, хуҫапа тӑнӑ ҫӗртех, манӑн ђӗре сике пуҫларӗ. Кухђӑна кӗтӗм те, салтак манран ыйта пуҫларӗ:

—Кам вӑл, хуҫа патне килнӗи? —тет. Епӗ:

—Илтрӗм те кӑштах: комунис ҫинђен калаҫаҫҫӗ. Хуҫа та мана вара: хай салтака ан йар, тесе каларӗ,—терӗм.

—Ну, сананӑн хуҫу ӑслӑ та! Анђах епӗ те ухмах мар. Есӗ мана пытарха, епӗ сана манмӑп,—терӗ салтак.

Епӗ ҫак самахсене илтсен хӑраса кайрӑм. Пӑхсан, пӑхсан—хай салтак хутаҫҫине илме пуҫларӗ. Хӑй ђунтанах пур кӗтессене те пӑхса пытанмалли вырӑн шырат̆. Ҫакна курсан ӑна питӗ шеллерӗм. Вара картиш йенђи ђӳређене уҫрӑм та:

—Сик ҫакӑнтан! Вара нӳхреп ҫине кайса пытан та епӗ пыриђђен кӗтсе лар—терӗм.

Карташне салтак сиксенех, манӑн ђӗре тата хытӑ сике пуҫларӗ. Урасем те хама ђӑтайми ђӗтреҫҫӗ. Ну ӗнтӗ пӗтрӗм пулӗ!—тесе шухӑшлатӑп. Ҫитменне, ҫав хушӑрах, Овҫҫанккин кӑшкӑрни илтӗнђӗ:

—Тарйе!—тет.

Епӗ хуҫа пӳртне кӗтӗм. Унта пӑшаллӑ ҫынсем хуҫапа ерех ӗҫеҫҫӗ. Пӗри, усал питлӗскер, манран:

— Есӗ кухђӑра ларакан ҫынна паллатна? тесе ыйтат̆.

— Ҫук, пӗлместӗп,—тетӗп епӗ.

— Хӑш йалсем вӑл?—тет каллех.

— Пӗлместӗп ҫав, пӗлсен калӑттӑм,—терӗм.

— Пыр, калаха ӑна, пирӗн пата килтӗр вӑл!—тет.

Епӗ ӑнланман пек пултӑм та:

— Ей, мӗн ӑна кунта кӳртетӗр. Пӑхас та килмест ӗнтӗ ун ҫине, пӗтӗм ҫанҫурӑмӗ ҫӗтӗк-ҫурӑк! Выртӑр кӑмака ҫинђе!—терӗм.

— Ҫывраt̆шим вӑл—терӗ ҫав усал питлийех.

— Паҫӑрах ҫывӑрса кайрӗ—терӗм.

— Ну ҫывӑртӑрха еппин, пурӗпӗрех пирӗн аларан нисҫта та тараймӗ—терӗ вара.

Епӗ тухса кайрӑм та тӳрех, пӗр ҫӑкӑр ђӗлли илсе, карташне ђупрӑм. Васкаса нӳхреп ҫине кӗтӗм. Салтак кӗтесре ларат̆. Ҫӑкӑр ђӗлли ђасрах тыттартӑм та, хыпаланса:

— Ђуп хӑвӑртрах, ђуп!—терӗм.

— Ӑҫта?—тет салтак

— Кайри хапхаран тар, кунта ан йул! терӗм.

Ҫак вӑхатрах, ђӳређе умӗнђе йыта вӗре пуҫларӗ. Ман хуҫа йаланах, йат сассине илтсен, карташне тухса пӑхаканђђӗ. Ҫавӑнпа, хуҫа илтесрен епӗ йатта пуҫӗнђен пырса тытрӑм. Анђах вӑл, тата пушшех хӑрлаттарса, пӳрнерен ҫыртма хӑтланат̆.

**Н. Шупуççынни.**

# ЙЕРКЁН

(*Малалли*).

### Х. Ниме.

Çавал йухаҫ çавранса,
Кӗмӗл пекех çуталса:
Унка шывне, Йӗршшӳне,
Тата ытти шывсене
Пухса пыраҫ Атӑла—
Ӗмӗтленсе малалла.
Аслӑ Атӑл анатта,
Таçта, таçта пит ката,
Хайӗн пуçне çиме тӗр,
Каскӑн калмӑк çӗрӗ витӗр
Илсе кайаҫ пур шыва
Хайар тинӗс Хӑвалана.
Çавал ана пӗлеймест,
Уншӑн-куншӑн шикленмест:
Ана пултӑр çеремсем,
Йешӗл улӑх—çарансем,
Вӑл йуратаҫ ҫӑваша—
Ӗçҫен, йӳрӗк йӑваша.
Вӑл шӑвараҫ шывӗпе,
Йуха-йуха хӗрипе,
Айлӑм аслӑ улаха—
Ҫӑвашсемшӗн ырлӑха:
Вӑхӑтӗнҫе çулӑр, тет,
Хӗлле утӑ пултӑр, тет.

Айлӑмпа Атӑла Çавал кӗнӗ çӗре
Шуртан шурӗ хуплаҫ тӗмеске вӗтлӗхре:
Хайахпа хӑмӑшлӑх—(ăçта пусан—путлӑх),
Хӑш етем выҫӑхне унтан пултӑр пӳтлӗх?
Çапах та Шуртана харсӑр ҫап авалтан
Хӑварнӑ хайӗнҫен Йентимӗр çав шуртан.
Йентимӗрӗн виç ывӑл, виççӗшӗ те матур:
Ӗçре те, ӗçкӗре те, вӑйра та сатур.
Çуркуннепе шурта никамран та малта
Кӗтеççӗ кӗсменлӗ кимӗсем Атӑлта.
Йентимӗр шанҫӑклӑ каскӑн тусӗсемпе
Каҫака утравӗнҫе хуралта кунӗпе.
Анатран йе туран кимӗсем курӑнсан—
Утрав çинҫе паллӑ: тӗтӗм йасӑрлансан.
Вара виçӗ ывӑлӗ хайсем пек ушкӑнпа
Шур лаҫака тӑрӑх шӑваççӗ хырӑмпа:
Кимӗсем камӑллӑ парнене памасан
Çыранпа та ан ут пуçу хаклӑ пулсан.
Пурлака-тарçӑна тӗкӗнмеççӗ ахаҫ,
Хуçашӑн улпутшӑн хатӗр вилӗм амаҫ,
Патша çарӗ пулсан именеççӗ тапӑнма,
Çапах та вӑрттӑн хӑрамаççӗ йунама:
,,Вайсем-тӗрексем пухӑпҫӑр-ха пӗртак,
Пырса çыпӑç вара пирӗн çума салтак!
Çапла шухӑшлаççӗ маттурсем Шуртанта,
Çапла пусмӑрлаççӗ хуçасене Атӑлта.
Çавалтан сылтӑмра асап хуçнӑ сӑртра,
Сӗм вӑрман сип-симӗс, шалт йуман та çака,
Тата ҫӑлахланнӑ шӗшкӗпеле палан—
Çӗрле хӳтлӗх тума тӑвансемшӗн аван.
Шӑрӑх кунсем çитсен кунта вӗсем куçаççӗ,
Йе Атӑл урлӑ Йалӑм йенне кайаççӗ.
Çапла Çавал анинҫе каскӑн çынсем пурнаççӗ,
Вырӑс хуçа суттине тапхӑр-тапхӑр тапнаççӗ,
Пуринҫен те ытларах тӑвар кимми хаклӑрах:
Тӑвар ҫӑваш çыннишӗн нимӗнрен те пахарах.
Тӑвар кимми тӗл пулсан,—
Хуçи сыхлан тапӑнсан:
Кӗтмен çӗртен типӗшар,
Йе çур кимӗ тӑвар пар,
Вара иртӗн малалла
Атӑл тӑрӑх тӑвалла.
Утӑ çулма тапратсан
Ҫарӑнаççӗ пӗр саман:

---

Салтак хыççӑн алӑка питӗрсен кухҫана кӗтӗм те, аран-аран сывлатӑп

— Ех, мӗн турӑм епӗ?—тесе шухӑшлатӑп.

— Мӗн тӑвасшӑн? Хам алӑпах кӑларса йатӑмçке!—тесе шикленетӗп. Çав салтак камне епӗ пӗлтӗм. Унҫух йалсенҫе комуниссене тытаҫҫӗç.

Унтан вара сӑмавара илсе хуçа паккуйне кайрӑм та, хӑранипе никам çине пӑхмасӑр кайалла сирпӗнсе тухрӑм. Вӗсем çине пӑхсан, вӗсем ман шухӑша пӗлме пултараççӗ тесе шухӑшлагӑп.— Унтан урам йенҫи ҫӳреҫене уçрӑм та, салтак тарнӑ йӗре пытарас тесе, çул çине хуçа кӗрӗкне кайса пӑрахрӑм. Хам вара, хӑранипе ухмахланнӑ пек пулса:

— Петрӗмӗр!.. Матвей Иванҫӑ! кӗрӗкне хайхи шулӗк илсе кайнӑ-ӑ-ӑ!—тесе хуçасем патне ҫупрӑм. Сӗтел хушшинҫен хӑнасем йакӑлт-йакӑлт сиксе тухрӗç те, пурте урама ҫуптартӑмӑр.

— Ав, кӗрӗкӳ вырта!—тесе кӑшкӑрҫӗ пӗри.

— Ăçталла ҫупрӗ вӑл? тесе ыйтаççӗ манран.

Епӗ йурийех вӗсене тепӗр йенелле кӑтартрӑм

— Ав, çавӑнта çавӑнта ҫупрӗ!—тесе кӑтартатӑп.

Вара çав икӗ салтак, лашисене утланҫӗç те, кӑтартнӑ çулпа сиккипе вӗçтерҫӗç.

Хуçа манпа вӑрçаҫ.

— Ухмах! Çаварна карса тӑратӑн. Вӑл çӗтӗк салтак комуниссен кӑмиссарӗҫҫӗ вӗт! Унӑн пуçне кастармалаҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ ун вырӑнне ху кайса ларӑн—тесе йатлаçаҫ мана.

Çапла мана Овççанккин питӗ хӑтӑрҫӗ. Епӗ вара хуттӑртан тухса хирти хурӑн айне кайса лартӑм. Унтан кӑштах шухӑшласа лартӑм та кӗпе аркине çӗклесе çывӑхри çырмана ҫупрӑм. Овççанккин патне манӑн арҫа йулҫӗ, анҫах вӑл арҫара нимӗн те çукпа пӗреххҫӗ те, ӑна шеллемерӗм: хуттӑртан саççимех тартӑм. Çӗрӗпех хирте ҫупса çӳрерӗм. Пырсан, пырсан ларса канатӑп та, каллех мала утатӑп. Çавӑн пек кайса вара хӗрӗх çухрӑм утрӑм. Хула та инçе йулмарӗ. Вара епӗ хулана кайма шухӑш тытрӑм: унта никам та мана пӗлекен çук, тыттарса пама пултараймаççӗ. Кайран вара йаланах çак хулара пурӑнтӑм. Комуниссен ласаретӗнҫе ӗçле пуçларӑмӑр. Унта ӗçлекенсене хуттӑрта пулнӑ ӗç çинҫен каласа патӑм.

**Неверӑв** çырнӑ.

**А. Светопол҄ски** куçарнӑ.

Йентимӗрӗн кил-йышӗн
Шуртан ҫинђе шухӑшӗ.
Улӑх ҫӗрне уйӑрса
Ҫарансене пуҫтарас,
Парнесене салатса
Йӗри-тавра ыр пулас.
Кӗркуннене кӗрсессӗн,
Уйри ӗҫсем пӗтсессӗн,
Каллех тухас шыв ҫине—
Ирӗк тутлӑхне ӗҫме.
Кӗркуннехи тӗтрене
Тав тумалла каҫхине.
Арӑш-пирӗш Атӑлта
Йентимӗрӗн пӗр урта.*)
Вӗтле шывӗ, Сӑр шывӗ,
Какшӑм шывӗпе Ҫавал,
Анӗшпеле Сӗве шывӗ
Уртана курнӑ авал.
Йентимӗрӗ Атӑлта,
Ывӑлӗсем Ҫавалта:
Тухмаст̆ вӗсен пуҫӗнђен
Шухӑш патша ҫарӗ ҫинђен:
—„Шупашкарта ҫар нумай,
Вӑл кансӗрлет пӗрехмай;
Хусан хули хӑйамат,
Унта тискер касамат,—
Патне пыма йурамаст̆,
Пырсан пуҫу сыв йулмаст̆.
Пуҫлӑхсене йӑпатсан,
Пӗртак парне тӑратсан—
Тӗттӗм ҫӗрле ҫўреме
Ирӗк, теҫҫӗ, кимсене.
Ҫапла майпа Йентимӗр
(Хыт ђӗрелӗ—ђӑн тимӗр)
Иртме Хусан хулинђен
Кӑҫалхи ҫул шухӑшлат̆.
Кунӗн-ҫӗрӗн ҫавӑн ҫинђен
Ывӑлсемпе канашлат̆:
„Шур Атӑлта шур нумай,
Кайак-кӗшӗк пит ирӗк,
Унта хуҫа та самай,
Патша ҫарӗ те сўрӗк,—
Тӗнђе касса ҫўреме
Пит те ырӑ кимсене!
Кайас, шӑвас унталла,
Кӗркуннепе кайалла!
Майра патша иртнӗ май
Хуралҫӑсем пит нумай,
Ҫапах парне тыттарсан
Хурал ђармаст̆ каҫ пулсан".
Ҫапла шухӑш сӑмахра
Йентимӗрӗн ку ҫура.
Утаманӑн шухӑшне
Кам ђухлатӑр хапӑлне?
Тӑвас тепине тӑват̆,
Анаталла вӑл шӑват̆.
Йеркинейе килӗнђе
Хӑвараҫҫӗ утӑ ҫинђе—
Улӑхсене валеҫме
Кўршӗсемпе килӗшме.
Тем пек йулас мар тесен те
Итлес пулат̆ ашшӗне.
Ҫитменнипе Йеркиней те
Кӑмӑл йулма хӑй килне:
Ула утпа ҫўреме,
Улӑх тӑрӑх вӗҫтерме;
Тата.... шухӑш пуҫӗнђе—
Ђӗкеҫ тухмаст̆ ђӗринђен...

Ҫав вӑхӑтра аслӑ Сившура
Ниме тума тапранат̆ Урха.
Ҫывӑхри йалсенђен нађар ҫынсене
Ђӗнме салатнӑ ҫиђӗ тарҫине:
„Алли-ури сыввисем, нимене!
Куҫӗ-пуҫӗ пуррисем, ӗҫлеме!
Кайран хырӑҫ-марӑҫран ђакарма
Урха хӑйех ыйтап, тет, пурмиса.
Шупашкарта тӑвар кимми илеп, тет,
Ҫурла-ҫава кӑҫаллӑха парап, тет.
Йаш-кӗрӗмсем, йатарласа пымалла;
Ватти-вӗтти хуран пӑтти сыхлама;
Карђӑк-кӗрђӗк карсак йашки пӗҫерме!!!
Нимене, нимене, Урха патне нимене!
Урха утӑ ними пуҫтарат̆,
Шуртан патне Ҫавал ҫине каймалла..."
Ҫиђӗ тарҫӑ йулан утпа хӑвалат̆—
Ниме валли йӗритаври йалсене йыхӑрат̆.
Йӗршшў ҫинђи улӑхсене ҫултарма
Хушса йанӑ Шӗнерпеле Апаша.
Ункӑ ҫинђи улӑхсене Туйсара
Ҫулма хушнӑ маркасемпе ку ҫура;
Хура ҫырма тӗлӗнђен
Ҫавал ҫырми таранђђен
Тӑрӑнсемпе Туптула
Ҫулма хушнӑ ҫурмалла.
Мӗн пур вӑйа пуҫтарса
Кайас пулат̆ Ҫавала,
Ҫавӑнпа та хӑй Урха
Пикеннӗ ниме пухма.
Йӳрӗк ҫынсем ниме тума хатӗрех:
Ниме пуҫӗ Ҫўлти касри Патирек—
Пулма пулнӑ пӗр кӗсрешӗн кӗрӗшсе;
Уламас та ута кайат̆ йерӗшсе
Йал кетўне ађипђипе хӑварса;
Мўлентей те какӑрлатат̆ сӑрнайа:
„Най-най, йун-йун, Уланки,
Ула кушак упӑшкки,
Авланнӑ ђух туйна ђӗн,
Аҫу-апу вилсессӗн—
Йупа туман ђӗ-ӗн!
Нирӗн, нирӗн, нирӑнна!
Утӑ ҫулма Шуртана!"
Ҫиментей те кӗслипелех нимене:
Кӑнтти-кӑнтти, хытарат̆,
Ђӑнтти-ђӑнтти! тутарат̆:
„Ах, ђунӑм, кӗслеҫӗм,
Вунҫиђӗ ҫулхи ӗмӗрӗм,
Тапхӑр, тапхӑр таврӑнат̆,
Ҫурҫӗрӗнђе вӑратат̆,
Ниме тесен ђуптарат̆."
Урхан утӑ нимине
Пур те хатӗр пымашкӑн,
Анђах Ҫавал улӑхне
Инђе, теҫҫӗ, каймашкӑн.
Ҫитменнипе: «ҫарансем—
Хађђђен ҫулман паккуссем—
Унти халӑх мӗн калӗ?
Йепле йута пахалӗ?

*) Уртӑ—ушкӑн (авалхи сӑмах), халӗ пирӗн патра хайар ҫынна, йе лашана „урта" тесе йатлаҫҫӗ.

Çарансене уйăрма
Авалтанпа йĕрке пур,
Анђах Çавалта çулма—
Ыран-пайан ан та пыр...
Йĕрту*) касси çыннипе
Тутар касси*) ĕмĕрех
Çарансемшĕн çулĕпе
Тавлашаççĕ ĕçкĕре. .
Шуртансене*) асăнсан,—
Пĕр сăмахран утаман
Ђĕлхе çине хăй килет:
Сунас**) çине çи килет:
Тускин*) касси туслă йал,
Анђах унăн вăй сахал,
Шуршăл*) тухĕ хур тăвĕ,
Макаçĕ*) уйăмĕ!..
Йал тенинђе, çын çинђе
Темĕн тĕслĕ сăмах пур;
Çапах Урха пур çинђе
Çавал çулма шанђăк пур...
Хуђахматсем, пикшиксем,
Тимĕр-çырмапа Мăнал,
Иккассисем, сившусем
(Ку йалсенĕн çĕр сахал,
Улăх çук та темелле)
Кайас, теççĕ, нимене
Утă çулма Çавала
Урхапала çурмалла.
— «Хĕлле выђах-ђĕрлĕхе
Апат кирлĕ усрама,
Сĕлĕ утшăн--тĕслĕхе,
Утă йалăм кăларма,
Тата апат-çимĕçе
Тавар тути—ăш тулли;
Куншăн кайăн кĕлмĕçе,
Урхан тăвар ким тулли!..
Кайас, кайас нимене,
Урхан аслă нимине!
Ыракана пыл ђашки,
Йулакана йун курки"...
Карĕç Йĕршшу çумĕнђен
Çавал çине вуник йал:
Урапасем çул çинђе—
Суса тухма çитмест хал...

Сарлака Çавалта, улăхра,
Шап-шурă ђăвашсем утăра.
Тара халăхĕ çулат̆ çара тар,
Хăваласа тăма та кирлĕ мар:
Шахăрса çава ђашкăрат̆,
Çавана халăх харăс туптат̆.
Касăкăн касăкăн йĕркесем—
Выртаççĕ хыçĕнђен пакуссем...
Пур вăйпитти тăрмашат̆,
Çурмаллашăн тăрăшат̆.
Ађи-пăђи шыв çинђе
Шыва кĕрет тиминçе.
Карђăк-кĕрђĕк пĕçерет—
Хуран пăтти хатĕрлет.
Старик тени сăрана —
Пĕрмай пăхат̆ лакуна.
Шуртан выртат̆ анатра,
Тутар касси кăшт тура.
Урхан тара халăхсем,
Кĕтмен çĕртен пусмăрсем.

Кам шутланă улăха
Пама тури халăха?
Анђах çывăхри пурмис
Пусмăра пулђĕ курми—
Пў кассинђи кнеç Тиђах
Халăхшăн хушмаç пĕр сăмах:
Урхапала паллашнă--
Мулпа ђаплăх туслашнă.
Йентимĕр те килте çук,
Хирĕç тăма куштан çук.
Çапла шуртан таврашсен
Пусăранђĕç пуçĕсем...
Çут хĕвел тўперен йаранса çаврăнат̆,
Кăвар пек, çулăм пек шăратса çунтарат̆:
Йанкăр уйăр кунсем, калама çук шăрăх!
Сарлака улăхра халăх утă çулат̆,
Шăрçа пек тар йухат̆ çулаканăн ўт тăрăх.
Çава сасси йантрат̆, ĕç йурриие йурлат̆.
Шур тумтирлĕ халăх каткă пек тăрăшат̆,
Ўле кĕпе çулнă май уçăлтарса вăркăшат̆.
Малалла тирĕнсе, çава çине пăхса
Тара халăх ĕçлет калăпĕшпе тăрса.
Сайра-хутра йурра йурлат̆ унăн ђĕлхи
(Ĕççыннишĕн йурăн пит паха сăмаххи):

„Аслă улăхра утă çултăмăр
Çавасем çине епĕр тайăлса,
Çитĕнсе çитсе арă пултăмăр
Атте-аппсем çине тайăлса".
„Ĕçлесе ĕçђен епĕр пултăмăр,
Пĕђĕкрен тар-шурпа паллашрăмăр.
Çавăнпа хура лутра пултăмăр,
Ырçын хисепне кĕримарăмăр".
„Çавал улăхĕ çаранлăх,
Пирĕн çавашăн сулăмлăх.
Тара халăхĕ тарлă çын,
Ырă куракан виçĕ çын"...
Хĕр-упраçсен, çамрăксен
Вĕсен хайсен йуррисем:
,,Сăрт хĕрринђе утă тавăртăм
Крепле çине тайăлса,
Каçпа киле епĕ таврăнтăм
Йулташпала ыталанса".
,,Ума пăхрăм—пит савăнтăм:
Çырла çеçки çупса ларат̆;
Çума пăхрăм—кулса йатăм:
Сара варли çумра тăрат̆"...
Çав вăхăтра, леш йенђе,
Çавал сăрђĕ айĕнђе,
Шĕшкĕлĕхре, сулхăнра
Ђĕкеç çўрет çырлара.
Икĕ карђăк унпала
Пухат̆ çырла пурака:
Тухнă вĕсем хурала
Йалти хаклă ахаха.
Ахах тени—сарă хĕр,
Хайар куçа ан ўкер:
Ăшĕ унăн лăпкă мар,
Çырла пухас шухăш мар.
Пыллă курăк—вăкăр пуç,
Телей уншăн пайан уç:
Тăват çулçăлли тĕл пулсан—
Ĕмĕт çитет вăл татсан.
Çавăнпа та хăй Ђĕкеç
Пуçне çĕртен вĕçертмест:
Тăват çулçăллă сапака
Тупасшăн вăл курăка.

Пухăшĕнђе—Йеркиней,
Унсăр уншăн çук телей:
Куçа хупсан курăнат̆,
Ăшђик тулли калаçат̆...
Йеркиней те инђех мар,
Çўлте, сăртра вăл тăрат̆—
Сăнне пăхма Пихампар,
Аран çилне шăнарат̆:
Тури халăх пусмăрне
Ăçтан ђатма халĕ пур?
Кун пек нăмăс ĕмĕрне
Шуртан çынни курман пуђ?

Анђах вăрçма çитмест хал,
Йулташĕсем пит сахал:
Çилленсен те шăлна çырт,
Кĕркуннеђђен кĕтсе ђăт.
Çапах çўлтен айала
Анас килет, ђун туртат̆:
Шăрăх ђухне Çавала
Шыва кĕни пит йурат̆!
Йапшăнса та выђаса
Сике сике вăл анат̆,
Туратсенђен уртăнса
Йавăççене вăђ! ават̆...
Сасартăках умĕнђе
Тăра парат̆ хўхĕм хĕр—
Хавасĕпе куçĕнђе
Тĕнђе пулђĕ шалт йĕкĕр.
Ђĕкеç куç е çĕклерĕ,
Ним тума та пĕлмерĕ:
Йеркинейĕ ыталат̆,
Ăсран йарса ђуп тăват̆...
Икĕ карђăк çук пулсан
Ђĕкеç пĕтнĕ пулĕђђĕ,
Ашшĕ патне Шуртантан
Таврăнман та пулĕђђĕ...
Çитменнине Ђĕкеçре
Урхан пекех вĕрет йун,
Çавăнпа та хĕрлĕхре
Намăс курмаст̆ унăн ђун...
(*Малалла пулат̆*).

*] Çавал Атăла кĕнĕ вырăнти йалсем.
**] Сунас пулсан—ĕç пулмаллах мар тесе калаççĕ.

# ÇИРĔМ УЛТТĂ.

**Елкере.**

Çирĕм улттăн вĕсем,
Çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă çулпуç—
Сахал мар.
Вĕсен йаҭĕ пуриншĕн те ылттăн,
Çирĕм улттăн вĕсем,
Çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă ҭăн-ҭăн комунар.
Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ,
Тамăкри пек вунсаккăрмĕш çул.
Кам пытарĕ пайан,
Кам тунĕ?
Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ
Çирĕм ултă маттур—
Пулҭĕç çук.
Каçпи тинĕс ҭăнах та йĕретçке,
Каçпала ес итлеха,
Сăна:
Шаумен...
Аçиспек...
Ҭшаппаритçе...*)
Каçпи тинĕс ҭăнах та йĕретçке—
Çирĕм ултă йата асăнаҭ.

---

Красноводск—
Ҭăвашла Хĕрлĕшыв вăл,
Хĕрлĕшывăн тĕрми пĕҭĕк мар.
Шаумен калаçаҭ:
— Савнă ывăл!
Çакăнта ак хупаç пăҭăхма.
Мĕншĕнне ăнланмашкăн ес çамрăк,
Камшăнне те ҭухлаймăнха хаҭ.
Кăлăхах сан пуçна епĕ çаврăп
Пысăк шухăш кўртсе,
Так ахаҭ.
Çавăнпа
Ытлашши сăмахсемсĕр
Уйрăлмашкăн тивет аçуна.
Самана пит хăрушă та сĕмсĕр,
Çак вутра
Ман асаплăх çунаҭ.
Ман çеç мар,
Тĕнҭери пур ĕçхалăх
Пайан кун çăланăç тилмерет.
Малашне тек асаймĕ ҭуралăх.
Йулашки хут тĕрмере ларап.
Çирĕм пилĕк Пакку комиссарĕ,
Çирĕм улттăмĕш еп хупăнап.
Каçарми ултавпа улталарĕ
Ирсĕр Фунтиккăв...
Паллăн ăна.
Сывă пул!
Анҭах курăпăр халĕ,
Ан куҭанăр,
Ан хуçăлăрсам.
Ыранхи телекрам мĕскер калĕ
Илиҭҭен ырă-сывă ларсан...

. . . . . . . . . . . . . . . . .

Ашшĕ урăх сăмах каламарĕ:

Хурал хушрĕ ҭасрах питĕрме.
— Сывă пултăр Капкас истеррори!!!*)
Тесе йаҭĕ пĕр харăс тĕрме.
Шаумен çĕлĕкне хывса илҭĕ,
Куçĕсем йăлкăшаç çиçĕм пек.
Итлĕр ав—
Калаçаҭ Ҭшаппаритçе.
Итлĕр ав калаçаҭ Аçиспек.
...Паккура пĕтĕм пурăнăç нехтă,
Çынсенҭен сăрханаҭ масут.
Акăҭҭан йыттисем иртĕннех тĕк—
Ĕççынни,
Хăвна ху ан сут!
Апшерон утравин хура йунĕ
Вĕсене халĕ канăç памасҭ.
Çав мула вĕçертсен
Мĕскер йулĕ
Ишĕлен хуралта йусама.?
Ишĕлет вĕт,
Куллен ишĕлетçке,
Хăварма йурамасҭ ырана.
Тен вĕсем аслă çулта кĕтеççĕ
Интийе, Тĕреке, Ирана**).
Турккестан хирĕнҭи шурă мамăк
Пĕр пекех вĕсене илĕртет.
Ĕççынни!
Ес кала:
„Памăп, памăп!
Çирĕм улттăн çеç мар епĕр!“ те.

* * *

Вăл каç тинĕс тискерĕн хумханнă,
Инкекпе ахăр пулнă пĕр ҭун.
Тăшмансем çĕрĕпех каварланнă—
Ретшинаҭт,
Пиҭҭереххăв та Кун***)
Ретшинаҭт,
Акăҭҭан *кăпиттанĕ*,
Асхапатшăн хăрушă хăна.
Интийе пăхăнтарнă *Приттани*
Мĕн çитменшĕн тата ăванаҭ?..
— Ан çиленĕр мана, мистер Трушкĕн****)
Анҭах еп шухăшлап ăрасна.
Çирĕм улттă—
Вăл тупăшлă ушкăн,
Ăна нимĕнсĕрех йарас мар.
Пирĕн *миçси*...
Пĕлетĕр вĕт есĕр:
Турккестан...
Малашне тен Капкас...
Çавăнпа,
Вăхăта ирттермесĕр,
*Мешшете* вĕсене ăсатас.
Мешшетри акăҭҭан вăрттăн çарĕ,
Кирлине лайăхрах тĕпҭесен—
Çăмăлах Интийе те куçарĕ,
А унта—
Вара пирĕв вĕсем...

---

*) 26 комиссартан ҭи паллисем. Шаумене унти пролеттариат „Капкас Ленинĕ“ тесе хисепленĕ.

*) Истеррори—револļутсионер.

**) Иран—Перççи.

***) Кун—Хĕрлĕшывра акăҭҭансемшĕн Фунттиккăв ролне выļанăскер.

****) Трушкĕн—Асхапатри шырав кўровĕн пуçлăхĕ.

—Ăнланатăп сире, кăппиттанăм,
Ăнланатăп аван, мистер *Тшоне.*
Ун ҫинҫен еп тахҫан шухăшланă,
Анҫах хаљ
Ман пĕртен пĕрех шанс!
Сирĕн шухăшăр тӳрĕ пулсассăн,
Сăмах питлĕхшĕн ҫеҫ пулмасан—
Ак халех
Телефон тăрăх сассăм
Пиҫҫерахҳăв патне ҫитĕ ман.
Вăл кунта
Ниҫсе ҫитнĕ тиктаттăр,
Сирĕнпе килĕштерĕ пуљ теп.
Мансăрах ĕнтĕ есĕр ҫухлаттăр:
Унăн йаҫĕ питрех те ҫӳлте...
Ретшинаљт кулса ҫеҫ алă паҫĕ,
Куллинҫе те шăлне вăл хăйраŤ.
Пиҫҫерахҳăвăн ҫаплă-тăк йаҫĕ—
Ун мĕскершĕн вара пит кайра?
Тахҫанах вăл ăна илнĕ сутăн,
Пиҫҫерахҳăв тахҫан унпала.
Шырав пуҫлăхĕ ҫеҫ
Пулнă кутăн,
Хаљ ăна та вăл ак
УлталаŤ.
Ҫирĕм улттă—
Вĕт тупăшлă ушкăн,
Пĕр лексен ҫĕрĕллех йарас мар.
Ан ҫиленĕр ăна, мистер Трушкĕн,
Анҫах шухăшĕ ун...
Арасна.

* * *

Хĕрлĕшыв тĕлĕрмест пĕр минут та,
Пĕр минут куҫ хупман кĕҫĕр Кун.
Ун пуҫне ҫавăраŤ Ҫирĕм Улттă,
Ҫирĕм Улттă ҫинҫе шухăш ун.
— Йе ҫăнах ҫаксене майласассăн?
Вĕт мĕн пур Капкасри пурлăха
Ҫак антра сурăх пек
Хура массă
Пуҫҫапса кӳрĕ ман халăха.
Вырăс, вырăс—
Тĕнҫе кĕлĕмҫи!
Пăлханах, пăлханах,
Тен пултарăн.
Анҫах саншăн хаљ нехтă, пенҫин
Паккура калама та ҫук тарăн.
Унта пирĕн йалав вĕлкĕшет,
Фонттансем пире майăн шавлаҫҫĕ.
Ак тата аппаланăр пăртакҫĕ,
Ҫур Раҫҫейĕр те
Касăлĕ шет.
Хĕрхенетĕп сире.
Пулĕ йывăр,
Комунисăм тăван мĕскĕнсем...
Акăљҫан! Акăљҫан!
Ан ҫывăр,
Ĕмĕр ҫаплă йатна ан ҫĕртсем!

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Асхапат—Херлĕшыв—Асхапат—
Шак та шак тутараŤ телекраф.
— Мĕн тăвас?
Тесе Кун аптратаŤ,
— Вĕлерес!
Тет лерен Пиҫҫерахҳăв.
Ретшинаљт ухă пек йарăнаŤ,
Кĕҫĕрех,
Ҫывăрмасăр васкас.
Капкаса,
Капкаса пар ăна,
Асĕнҫен кайас ҫук ун Капкас.
Хĕрĕх тăххăрмĕш нумĕр правус,
Ик вакун туркменпа вырăс ҫарĕ.
— Ахвитсер!
Пуҫуна пит ан ус!
Тесе ҫеҫ каппиттан кĕрсе кайрĕ.
Пĕр никам та пĕлмест халĕ—
Темшĕн
Кирлĕ пулнă кун ҫухлĕ салтак.
*Ретшинаљт куппере пĕтљтенех мĕн*
*Ҫирĕм Улттăшăн пусă алтать.*
Вакунсем алланса пынă майăн
Вăл пушшех хĕпĕртет хăй ҫунне:
— Шаумен!
Мана тин ес пуҫ тайăн
Ҫак хĕҫе хам ҫĕкленĕ ҫухне...
Ҫухрăмсем вĕлтетеҫҫĕ хисепсĕр,
Кăвакарҫĕ кĕрхи тĕттĕм каҫ.
Ах, сисетпĕр, сисетпĕр, сисетпĕр!
Тенĕнех пралуксем йантăраҫ.
Акăљҫан кантăкран пăхса пыҫĕ—
Ҫеҫен хир,
Саксаул та хăйăр.
Куҫĕсем етем йунĕшĕн выҫă,
Вăр-хурах пек ҫиллес те хайар.

* * *

— Тĕрме алăкĕ ма йывăҫ марши,
Ма ҫӳлтеши ун кантăкĕсем?..
Пуҫласам пĕрех хут «Сейттун Маршĕ»*)
Хам ҫуралнă ҫĕре еп вĕҫем.
Унта ватă аннеҫăм ман йулҫĕ,
Аннепе аса килҫĕ Арас**)
Ҫав Арас хĕррин́ҫе пирĕн ҫуртҫĕ,
Еп йалан шухăшлаттăм:
Тарас...
Вунтăвата ҫултах килтен тухрăм,
Анҫах ман халăхăн сум ҫукран—
Вунă пин,
Йе вунпилĕк пин ҫухрăм
Ҫул ҫӳренĕ пуљ епĕ ҫуран.
Савăтан кĕрен,
Хапрăкан—
Тăрăхлаҫҫĕ, кулаҫҫĕ кăна.
Ман пуласси килместҫĕ ҫын айĕ,
Пулмассăн сăнҫăр тăхăнан.
Полљшевик!
Еп пĕлеп: вăл ҫапа
Кăларасшăн ҫунмасŤ хăй ҫĕрне.
Хĕвелтухăҫ ҫыннийĕ ҫапах
Иртнине манас ҫук ĕмĕрне.
Полљшевик!
Ун тăван ҫĕр-шывĕ
Кунта мар,
Лере мар—
Тĕнҫипех.
Хĕвелтухăҫ ҫынни те хаљ тăвĕ
Йуррине хăй тăван ҫĕлхипе.

*) Сейттун Маршĕ—ерменсен хăйсен халăхĕшĕн вăрҫна ҫух йурлакан револљутсиллĕ йурри.
**) Арас—шыв йаҫĕ.

Пуçласам пĕрех хут „Сейттун Маршĕ“—
Хам çуралнă çĕре еп вĕçем...
Тĕрме алăкĕ ма йываç марши,
Ма çўлтеши
Ун кантăкĕсем?..
. . . . . . . . . .
Ак пĕри çывхарђĕ вăрахăн,
Такама ўкĕтлет хăй пухма:
—Ăнлансан шикленмешкĕн пăрахăн,
Ăнланмастăн пулсан—
Ес ухмах...
Паккури пролеттари хађ пирĕн,
Çирĕм Улттă—
Вăл пысăк ђăрмав.
Çавăнпа
Ес вĕсемшĕн ан хирĕн,
Еп кунта вĕт килмен каçарма.
Тата çур сехетрен епĕ пулăп,
Ес унђђен те ĕçе татмасан—
Çак ука шерепелĕ хĕçпулă
Пит те тутлă апат вара ман!..
Хурал шалт туса çеç хисеп пађĕ:
Манран ним те килмест, хоспотин.
Ретшинађт каппиттан ырă йађĕ
Ăшăмран тухас çук пайан тин...
—Ку аван, ку аван.
Çапла кирлĕ,
Пăхăнас пулаť аслă ђина.
Сире пит хĕстереççĕ мĕн вирлĕ,
Анђах кур—
Епĕ вăл Ретшинађт!

---

Варамман кĕмсĕртетрĕ çăра,
Ђĕрисем виксе илђĕç пурин те.
Çирĕм улта кăмиссара
Мĕне кирлĕ хађ Перççи йе Инти?
Хађ кунта вĕт кунта пĕтермен,
Капкасра тумаллађђĕ таванлах.
Хаť круçин,
Хаť ђерккес,
Хаť ермен—
Кашни ырлăх кĕтет, кашни халăх.
Анђах ак Çирĕм Улттăшĕ те
Пĕр етем мелкине тĕл пулаççĕ.
—Хатĕрленĕр
Халех Мешпете!
Тесе хуђĕ салхулă хуралçă...

* * *

—Машшинис Шђеколђуттĕн!
Итле:
Перевал йе Ахђа-Куйма*)...
Ĕçĕ пулĕ веçех камитле,
Унпала ес пултаран пуйма.
Санран епĕр нумай ыйтас çук,
Анђах ху тек çўремĕн çарран.
Еп кăтартнă çĕре çитес ђух
Правуса шăхăртан та ђаран.
Вăл тĕлте расйес мар,
Стантсă мар,—
Саксаул тĕмĕсем те хăйăр.
Ăнланатăн пуђ теп?
Ман сăмах
Çăмăлах катмалли вĕт майăр...

Машшинис Штеколђуттĕн итлет,
Май килсессĕн хавас вăл пуйма.
Ĕçĕ пулĕ веçех камитле—
Перевал йе Ахђа—Куйма...
Саксаул тĕмĕсем...
Çеçен хир...
Ретшинађт алă сулђĕ:
—Ђар!
Шурăмпуç хăпараť...
Ђеђен ир...
Ни расйес ку, ни стантсă та мар.
Кĕпĕрленђĕ те тухрĕ салтак,
Тĕрĕслеççĕ пăшалĕсене.
—Ахвитсер!
Есĕр пулăр малта,
Хађ пĕр вуннăшне çеç еп ђĕнеп...
Вакуна витĕрех ку тирет,
Кĕрĕслетрĕ ак салăп тулта.
. . . . . . . . . . . .
—Йултăшсем!
Улталарĕç пире!...
Йултăшсем!..
Ултав!! Ултав!!!
—Йурĕ, йурĕ...
Хађ тин пуç ап ус...
Фиолеттăв, Меттаксă, Перк...
—Еп лăпках,—
Тет пĕр çамрăк матрус—
Сывă пултăр Комуна!
Пер!..
. . . . . . . . . .
Икçĕр çиђђĕмĕш йунлă çухрăм,
Йунпала хĕрелен Хĕрлĕшыв!..
Таса йун, ес пĕр айăпсăр йухран,
Икçĕр çиђђĕмĕш йунлă çухрăм,
Вăл пайан та çаплах хĕрлĕши?
Йе вĕсен шăпийех çапла пулнă,
Тавăрмашкăн мĕскер парасха?
Каçпи тинĕс пайан та ав хумлă,
Тен вĕсен шăпийех çапла пулнă,—
Кашни çыннăн хăйне ăраскал.
Саксаул тĕмĕсем ђĕрĕ йунлă,
Ăна курĕç пайтах мĕлйун.
Çирĕм улттăн çеç мар епĕр йулнă,
Саксаул тĕмĕсем ђĕрĕ йунла,
Хăйăра сăрхăнаймĕ вăл йун.
Ав самум та çаплах йĕрсе илђĕ,
Тинкерсе ес итлеха,
Сана:
Шаумен...
Аçиспек...
Ђшăппаритçе...
Ах самум та çаплах йĕрсе илђĕ—
Çирĕм Улта йата асăнаť.
Çирĕм улттăн вĕсем,
Çирĕм улттăн,
Çирĕм улта парне—
Сахал мар.
Вĕсеп йађĕ пуриншĕн те ылттăн,
Çирĕм ултăн вĕсем,
Çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă ђан-ђăн комунар!

**Хусанкай.**

---

*) 26 кăмиссара çав икĕ стантсă хушшинђе, Хĕрлĕ шывран 207 çухрăмра, вĕлернĕ.

**П. Н. Оççиппăв.**

# ЫЛХАНЛĂ ЙĂХ.

**IV пайлă, пролокпа 5 карттинлă трамă.**

(*Йулашки. Пуçламăшĕ „Сунталăн“ 5-мĕш номĕрĕнтђе*).

## III-мĕш ПАЙĔ.

(*Хвеђккасен килĕ. Пĕр йентђе кăмака, тепĕр йентђе стел*).

### 1-мĕш курăнни.

(*Çамрăк атђапа Макçăм кулкаласа, хыпаланса кĕреççĕ*).

Çамрăк ађа. Ха-ха!.. Ну и тыттартăм та!.. Еп Хвеђккана сурăх ури вырăнне кађака ури тыттартăм!

Макçăм. Ха-ха-ха! Мĕнле апла?

Çамрăк ађа. Вĕсем кађакана ĕне витине хупаççĕ; епĕ ăна витерен кăлартăм та картана кайса хупрăм. Лешсем кĕç пыђĕç кĕшĕлтетсе... Сисетĕп ĕнтĕ—Хвеђкка пăшăлтатса пыраť.. Сурăхсене пĕр кĕтесселле тĕрлеттерсе йатăм та, йури Хвеђкка патнелле кађакана çавăтса пыратăп. Ну хыпалаť!.. Хайхи — кап йарса илђĕ кађакана кайри уринђен. Кађака хăранипе: «Ме-е-ек!“ — тесе йара пађĕ. Ну хĕрсем ахăлтатса тухса тарђĕç! Ха-ха-ха! (*Иккĕшĕ те кулаççĕ*).

Макçăм. Ха-ха-ха! Халĕ çта ђупрĕç тата вĕсем?

Çамрăк ађа. Пĕр касси анкартине пуђах тăпăлтарма ђупрĕç, иккĕш — çĕрĕ йама шыв ăсма кайрĕç.

Макçăм. Ех, çавăнта кайса пĕр мăшкăл тумаллађђĕ тата!

Çамрăк ађа. Унта ĕç тухмасť; тавай пӳртре мĕн те пулсан туса хурар! Итлеха: вĕсем пĕрле пуçтарăнса çĕрĕ йараççĕ пайан, сан çĕрĕ çуки?

Макçăм. Çук, хăйамат.

Çамрăк ађа. Ђимха, ăна пăралукран та тума пулаť вĕт?

Макçăм. Тумасăр... (*Кăмака çине кăтартса*). Ав йешђĕк çумĕнђе пралук пур. Тавай татса тăвас...

Çамрăк ађа. (*Кăмака çине хăпарса кайса*). А-ха!..

Макçăм. Çтаха хам хуçам. (*Авкаласа хуçать*). Акă пулђĕ те. Мĕн тăвас тетĕн ес унпа?

Çамрăк ађа. Ђим, сан çип татки çуки?

Макçăм. (*Кĕрĕк çумĕнтђен тăпăлтарса илет*). Акă, ме.

Çамрăк ађа. Вĕсемпе пĕрле епĕр те çак çĕрре йаратпăр.

Макçăм. Ну, кун пек çĕрре вĕсем йартармаççĕ те.

Çамрăк ађа. Сисмеççĕ вĕсем. Тимри çумне мĕн те пулсан кулăшларах йапала çыхса йарасђĕ.

Макçăм. Ав хушăксенђе таракан нумай, тавай çыхса йарар — кама тухаť!

Çамрăк ађа. Ха-ха-ха!.. Кушак кайăк çыхса йарасђĕ, ну кулă пулĕђђĕ те!

Макçăм. Таракан та йураťçке... Пысăк çăмарталăраххине йарсан çитрĕ ахăлтатма?

Çамрăк ађа. (*Тараканне тытса çĕрĕ çумне çипне çыхса хатĕрлет*). Ха-ха-ха! Ну, кулатпăр та ĕнтĕ! (*Иккĕш те кула-кула çыхаççĕ, хыçалта сасăсем илтĕнеççĕ*).

Макçăм. Килеççĕ мари?

Çамрăк ађа. Тавай пытанса ларар, мĕн хытланаççĕ.

Макçăм. Çта пытанас?

Çамрăк ађа. Айта кăмака çине. (*Улăхса кайса*). Е-хе, кунта ыраш типĕтеççĕ мĕн?

Макçăм. Пĕрер кĕтесре вырнаçма пулаť! (*Улăхса пытанаççĕ*).

### 2-мĕш курăнни.

(*Хĕрсем йурланса пĕтнĕ, пурте ыраш пуçахĕсем тытса кĕреççĕ*).

Хвеђкка. (*Хывăнна тђух*). Ман пĕр хуçăлмасăр тухрĕ вăрăмскер! Пуçахĕ пысăк, йаштак ђипер кађђă пулаť пулĕха.

Хветле. Манăн мăшăрлă пулмас пулмалла, пĕрђисем тăкăнса пĕтнĕ). (*Стел патне кайса путђахсене шĕкĕлтђеме пуçлаççĕ*).

Хвеђкка. Их, нумай пĕрђĕллĕ ку пуçах!.. Иккĕ, тăваттă, улттă...

Хветле. Манăн мĕн пурĕ те пилĕк пĕрђĕ çех пулас... Апла кăçалхи çул кађђа кайасси пулаймасť—мăшăрсăр. [*Çав вăхăтра кăмака çинтђен çамрăк атђа стел çине ыраш пĕртђисем ывăтат*). Е-е, кунта ӳкнĕ мĕн пĕр пĕрђи, курманта.

Хвеђкка. Сан мар вăл, манăн хађ ывăçран тӳхса ӳкрĕ.

Хветле. Сан мар ĕнтĕ, хамăннах: манăн мăшăрсăр. Сан çтан килсе ӳктĕр ман патна.

Хвеђкка. Ђăнахах ман ĕнтĕ, шĕкĕлђенĕ ђухне сан йеннелле сирпĕнсе кайрĕ.

Хветле. Çтан сан пултăр вăл ман умра выртакан ыраш пĕрђи. Вара пĕтĕм пуçахра та пилĕк ыраш пĕрђи çех пулаťи? Тупнă пĕр ыраш пĕрђишĕн тавлашма!

Хвеђкка. Çапла, вара ман мăшăрсăр пулаť çке. Малтан хăй пилĕк пĕрђĕ çех терĕ, кайран манăнне пĕр пĕрђине йарса илђĕ те, мăшăрлă пулса та ларђĕ. Кирек мĕнле пулсан та ес кăçал кађђа кайас çук, сан патна хăтана та никам та пыман хађ!

Хветле. Ах тур, йалта ес çех пулĕ кайаканни. Хăйĕн мăшăрсăр пулнă та ĕнтĕ, пĕр ыраш пĕрђине манăнне илесшĕн. (*Çамрăк атђа каллех виç-тăват пĕртђĕ ывăтат*).

Хвеђкка. Кирлĕ мар çке, мăшăрлан... Еп çапах кăçал кађђа кайатăп.

Хветле. (*Кăтартса*). Авă вĕт, ху умрах выртаť ыраш пĕрђи, мана ахалех çиленет...

Хвеђкка. Е-е, ђăнах та çке... Каçар, Хветле, тархасшĕн, еп курман та...

Хветле. Тоттă-ă!.. Çын аллонђи кукăђ ахађ пысăк курăнаť! Ав, сан унта иккĕ те выртаççĕ...

Хвеђкка. Пĕрех çке, çта иккĕ? Вăл сан ӳкнĕ пулмалла, ман хађ шăпах мăшăр...

Хветле. Манăн улттă, акă пăх... Урăх пулмалла мар.

Хвеђкка. (*Ыттисентђен ыйтат*). Камăн ку ыраш пĕрђи?

Сасăсем. Манăн пулмалла!.. Манăн!.. *Виççĕн-тăваттăн илме кармашаççĕ*).

Çамрăк ађа. (*Кăмака çинтђен ывăçипех ыраш ывăтат те, Макçăмпа иккĕш те ахăлтатса кулаççĕ*). Ха-ха-ха!.. Камăн мăшăрсăр, тытăр!..

Хвеђ. Тху, киремет ађи, унта улăхса ларма та ĕлкĕрпĕ! (*Туртђкапа хăмсарать*). Ай!.. Унта тата пурçке...

М а к ç ă м. (*Кăмака çинђен анат*). Çук, урăх никам та çук, Хвеђкка.

Ç а м р ă к а ђ а. Ну, хĕрсем, мăшăрлантăри? Ха-ха-ха!.. (*Кулаççĕ*).

Х в е т л е. Кантăкран шаккаççĕ мари? Уђуксем çĕрĕ йама шыв илсе килђĕç пулмалла.

Х в е ђ к к а. Кам унта, пăхха.

М а к ç ă м. (*Ђупса кайса пăхат*). Уђук пĕри, тепри такам палăрмасҭ Кайса уçаси?

Хвенка. Ађасем мари?

М а к ç ă м. Çу-ук, хĕрсем... Райккапа Уђук пулмалла. (*Тухса кайат*).

Х в е ђ к к а. (*Çамрăк аҭана*). Есĕр çтан лекнĕ кунта Макçăмпа? Хапхана сулăп хунăђђĕ çке.

Ç а м р ă к а ђ а. Ой пирĕн валли шăтăк нумай. (*Кулкалаççĕ*).

### 3-мĕш курăнни.

(*Макçăмпа ик арçын аҭа ахăлтатса кĕреççĕ*).

Х в е ђ к к а. Ах, путсĕрскер, лартнă çке вăл мана.

М а к ç ă м. Сурăх ури сăрине кађђăсемсĕр ĕçесçи? Ха ес, Хвеђкка!

Х в е ђ к к а. Сирĕн пеккисене ĕçтерсе мĕн усси пур.

М а к ç ă м. Пирĕн пек «йаштак» кађђăсене таçтан тупас тетĕнха есĕ? Ха-ха-ха! (*Пурте кулаççĕ*).

### 4-мĕш курăнни.

(*Уђукпа пĕр хĕр кĕреççĕ, пĕри шыв витрине каҭа пӳрнипе çĕкленĕ. Витрине сĕтел çине лартаççĕ*).

С а с ă с е м. Уђуксем шыв илсе килђĕç, çĕрĕ йарас

М а к ç ă м. Айтăр, айтăр... Мĕн пăхса ларас? Йумăç йарас: кама мĕнле пурăнăç тухаҭ?

Х в е ђ к к а. Хăвăр патра кайăр та йарăр.

М а к ç ă м. Мĕн пит çиленнĕ вăрă есĕ?

Ç а м р ă к а ђ а. Хвеђкка, тавай алшăлли, — хăм пуçласа йарам... (*Алшăллипе витрене хуплана тыух, хăйĕн çĕррине йарат*).

М а к ç ă м. Тавай, ларăр пурте. . Кӳрĕр çĕрĕсене, йарăр... паллă тăвăр. (*Витрене çĕррисене кулкаласа йараççĕ; Çамрăк аҭа пăхса кулса ларат; лешсем çак йурра йурласа çĕррисене тыеретпе кăлараççĕ*).

Çыхсан çыхăр шурă тутрăра,
Сара çӳçĕр витĕр курăнтăр;
Сара çӳçĕр витĕр курăнтăр,

## Моттотсиклиссем Шупашкарта.



„Тинамо" спорт опшђĕствин ђленĕсем Хусантан Ленинкрата кайнă ђухне Шупашкарта канма ђарăннă. Ӳкерђĕк çинђе: Ђулхулана тухса кайма хатĕр тăраççĕ,

## Таса сывлăш, фисккулђттурă — сывлăх тусĕсем.



Типокрафинђе ĕçлекенсем йăвăр ĕç хыççăн ... Атăк хĕрринђе. Спорт вăййи.

Савнă тусăр курсан савăнтăр.
Ман(ăн) шур(ă) тутрăм пĕрре анђах,
Çуса çаксан шурă йур пекех;
Манăн ђунăм савни пĕрех çех,
Ăна курсан çурри ђун пекех.
Айакра вут çути куранаҭ,
Симĕс арђа тççи маршн çав;
Айакра çын сасси илтĕнет —
Манăн савни сасси маршн çав.
Айакри вут çути мĕн усси,
Алă шăнна ђухне пулмасан;
Айакри таванăн мĕн усси,
Курас килнĕ ђухне пулмасан.

(*Çак сăвна йурласа пĕтернĕ çĕре, Хвеђкка пралук çĕрре туртса кăларат: пурте ахăлтатса кулса йараççĕ*).

Ç а м р ă к а ђ а. Ну ђун савни! ха-ха-ха!.. Сан кађђа, Хвеђка, кађака пек сухалла, таракан пек уссиллĕ, йăмтак хĕрлĕскер пулаҭ. Ха-ха-ха!... (*Пурте кулаççĕ*).

Х в е ђ к к а. Кайатна ес кунтан, каймасна?.. (*Çĕррипе перет те, витрери шывна сапма тăрат*).

Ç а м р ă к а ђ а. Охо-хо-хо!.. Сап, сап тарађђен!.. (*Тухса тарат, леш алăк патне çитеђђен витрене хăвалат; урамран купăс сассипе йурлани илтĕнет*).

Х в е т л е. Ей, Хвеђкка, лешсем килеççĕ... (*Кантăкран пăхаççĕ*).

М а к ç ă м. Камсем?..

Х в е ђ к к а. Санăн пурне те пĕлес пулаҭ!

М а к ç ă м. А-а! Есĕр сурхури ĕçки ĕçесшĕн!.. Ентĕ пĕлетĕп, Михаđасăр ăçтан ĕçкĕ пултăр. Пире ентĕ кукăлне те çитерместĕр пулĕ.

Х в е ђ к к а. Укçу пулсан ĕçетĕн.

М а к ç ă м. Епĕр ку таранђђен укçасăрах çикеленĕђђĕха.

С а с ă с е м. Çитрĕç!.. Кĕреççĕ!.. (*Хăшĕ-хăшĕ хирĕç тухаççĕ, пăршак тăрсан Михаҭапа йулташĕсем, тата вĕсемпе пĕрле купăсçă кĕрет*). .

### 5-мĕш курăнни.

(*Каҭђăсем хыттăн йурласа кĕреççĕ, пӳртри хĕрсем сĕтел çинђен йапаласене пуçтараççĕ*).

М и х а ђ а. Ну, хĕрсем, кăларăр сăра, ерех, кукăђ!.. (*Хвеђкка патне пырса вăрттăн Макçăм çине пăхса калат*). А ку çара çирçине мĕн тума ђĕннĕ есĕр?

Х в е ђ к к а. Никам та ђĕнмен вĕсене, хăйсем килсе тухрĕç.

М и х а ђ а. Хăвалас мари вĕсене кунтан?

Х в е ђ к к а. Ларђђăр ентĕ, мĕн тумалла хăваласа.

Михаҫа. Укҫа хуманнине кукăҫ ҫитермелле мар, асту!..

(*Хыттăн*). А ну, кăларăр сăра!!... Кармонис, мĕн наҫар калатăн, ҫĕмĕр лайăхрах!.. (*Йурлаҫҫĕ, хĕрсем катҫҫăсене сăра ĕҫтереҫҫĕ*).

Макҫăм. Ей, хĕрсем, мĕн вырăнтан сикместĕр? (*Хĕрсене туртса кăларса ташлаттараҫҫĕ*) Ташлăр!.. (*Хвеҫккапа йулташĕсем катҫҫăсене ĕҫтереҫҫĕ, хăшĕ-пĕри ташлаҫҫĕ, ал ҫупаҫҫĕ*).

**Ташăлла кĕвĕ.**

Линка-линка авкаланма
Йуман хăма кирлĕ: (икĕ хут).
Хаҫ те йуман, тата йуман,
Тата йуман кирлĕ. (икĕ хут).
Йакăш-йакăш шукалама
Йака хăма кирлĕ: (икĕ хут)
Хаҫ те йака, тата йака,
Тата йака кирлĕ. (икĕ хут).
Ик аллăма сулкалама
Кĕмĕл ҫĕрĕ кирлĕ: (2-хут).
Хаҫ те кĕмĕл, тата кĕмĕл,
Тата кĕмĕл кирлĕ. (2-хут)
Ҫуп-ҫуп, ҫуп тума
Ҫипер аҫа кирлĕ: (2-хут).
Хаҫ те ҫипер, тата ҫипер,
Тата ҫипер кирлĕ. (икĕ хут).

**6-мĕш курăнни.**

(*Ҫылай ташласан Райкка кĕрет. Йна курсан ташлама ҫарăнаҫҫĕ те, хĕрсем тумтирне хывма ҫупса выраҫҫĕ*).

Хвеҫкка. Айта, ирт тĕпелерех.

Райкка. Ҫимха, ҫим... Хвеҫкка, унта тулта манăн хăна пур, кĕме хăймасҭ... Вăл сурхури ĕҫкине никҫан та курман, курасшĕн.

Макҫăм. (*Ҫупса выраа*). Кам пур тетĕн, леш комсомолĕси?.. Айта ҫĕн, кĕтĕр... Тек есĕр: йалпа «смыҫка» тумалла теттĕр. (*Хыттăн*). Ей, аҫасем, унта тулта леш, хуларан килнĕ комсомолĕс пур, айтăр ҫĕнсе кӳртсе „настойашҫăй комсомоҫскăй веҫҫĕр" тăватпăр!.. (*Пурте кулаҫҫĕ*).

Михаҫа. Асту: «смыҫкă» вырăнне «стыҫка» ан пултăр!

Макҫăм. Ес, «кулак аҫи», ытлашши ан шавлаха унта... Ну, аҫасем, епĕ тухса ҫĕнетĕп.

Сасăсем. Ҫĕн! ҫĕн!.. (*Макҫăмпа Райкка тухса ҫĕнсе кĕреҫҫĕ: кармонне каллех ташă кĕввиь пуҫлать*).

**7-мĕш курăнни.**

(*Пикавайăх, Макҫăм, Райкка кĕреҫҫĕ*).

Макҫăм. Ан ватан, йулташ, иртсе лар!.. Тен ху та пирĕнпе пĕрле ташлăн.

Пикаваййăх. Ҫук, епĕр Райккапа кашт куратпăр, та шкулта пионерсем кĕтеҫҫĕ...

Макҫăм. Кукăҫ ҫитермесĕр йамастпăр ĕнтĕ! Ҫапла вĕт Райкка?..

Михаҫа. (*йулташĕсене*). Ех, шуйттан, комантоваҭ тума хăтланаҭ, хăйĕн кăсйинҫе пĕр пус укҫи ҫук, йанттине ҫитересшĕн!.. *Хĕрсем стел ҫине кукăҫ лартаҫҫĕ; вăл вăхăтра пурте пĕр касу йурлаҫҫĕ, вара Хвеҫккапа йулташĕсем катҫҫисене кукăҫ ҫиме лартаҫҫĕ*).

Михаҫа. Тавай хĕрсем, пуҫлас кукăҫа.,. Кам мĕн ҫул хунине лайăхрах сыхлăр: укҫасăр ҫийес текенсем тупăнĕҫ.

Пикавайăх. (*Райккана*) Мĕнле йапала ку, кукăҫ ҫинĕшĕн, вара, укҫа тӳлеҫҫи?

Райкка. Сана ахалех ҫитереҫҫĕ, ес айакри хăна вĕт.

Макҫăм. (*Пикавайăха*). Тавай, йулташ, кукăҫ ҫиме лар, иксĕмĕр «смыҫкă» тăватпăр.

Пикавайăх. Ҫук, еп лармастăп, манăн укҫа ҫук.

Макҫăм. Айта, айта!.. (*Вăрттăнтарах*). Ман ҫирĕм пус пур, ҫурмалла хуратпăр.

Хветле. Макҫăм, ларăр, кукăҫ пуҫлаҫҫĕ. (*Макҫăм Пикавайăха ҫавăтса кайса йунашар лартать; Райкка хĕрсемпе калаҫса ларать*).

Хвеҫкка. Килĕрха, кукăлне пуҫлаҫҫен пĕрер курка ĕҫĕр!.. (*Хĕрсем ĕҫтереҫҫĕ, катҫҫăсем пур пек укҫисене силлеҫҫĕ; хăшĕн сахал та пуҫĕсене кулкаласа сулаҫҫĕ*).

Макҫăм. Ват, хĕрсем, хам пуҫласа хурса парам, тек укҫу ҫук тетĕр... Ман кунта укҫа ҫирĕм ҫын пулсан ҫирĕм ҫыншĕн те ҫитет!.. Еп ханапа хампăн ик тенкĕ хуратăп. Кам ытларах хураҭ? (*Укҫине хумасăрах калать*).

Михаҫа. Ха-ха-ха!.. Ик тенкĕ хурса хăрататăп, терĕн пуҫ, Михаҫаран ытларах пулаҭ, терĕн пуҫ!? Еп виҫ тенкĕ хуратăп! Кам ытларах?.. Ха-ха-ха!.. А ну, Макҫăм, тепĕр тенкĕ тупайатна хавăн шăтăк кĕсйунта? Ха-ха-ха!..

Макҫăм. Ес, кулатăн ҫех пули виҫ тенкĕ? Еп пиллĕк хуратăп! (*Кушелккинҫен хыпаланса кăларан пекки тăвать*).

Михаҫа. Ах, ҫорт потери! Кăлар вуннă! (*Ҫервонĕс кăларса хурать, пурте инттересленсе кулса пăхаҫҫĕ*).

Макҫăм. (*Кушелккинҫен ҫирĕм пус кăларса ҫапать*). Ме ҫирĕм!.. (*Пурте ахăлтатса кулса йараҫҫĕ*).

Пурте. Ҫирĕм пус!.. Ха-ха-ха!..

Михаҫа. Ех, хăранҫăк! Мĕн пур укҫи те ҫирĕм пус ҫех хăйĕн—кукăҫ ҫиме лараҭ «тармойет».

Макҫăм. Кам «тармойет»?.. (*Сиксе тăрать*). Вуннă тенкĕ укҫу пур тесе пĕҫҫен ҫисе ларас тетне?.. Ме, ҫыхăн! (*Кукăҫ таткипе питĕнҫен лаплаттарать; Пикавайăх хăраса сĕтел хушшинҫен тухать*).

Михаҫа. А-а, ес аплан? Ĕнер аттене хĕнесе те, пайан манпа ҫапăҫса пăхас терĕне!.. Шалиш, тăван!.. Еп сана, пĕр тытсан, хăрах алăпах нӳҫĕркесе прахатăп. Ме, ĕҫ, «тармойет»! (*Ерех кленҫипе тытса перет, пурте сиксе тăраҫҫĕ*).

Пикавайăх. Ей, йулташсем, ан вăрҫăр! Тупнă кукăҫ таткишĕн тӳпелешме!

Михаҫа. Ес мĕн тата хавăн кăссамул йатупа ҫын ĕҫне ҫыпăҫса ҫӳретĕн!? Пуҫна ҫĕмĕриҫҫен тухса кай кунтан йаҫҫейккуна, атту... (*Тепĕр кĕленҫине йарса илет*).

Макҫăм. Ай-йай хăратаканскер тупăннаҫке! Ҫармалла мари ҫаварна?

Райкка. (*Пикавайăха тулалла ҫĕнет: Пикавайăх кайма тăрать, анҫах алăк патнелле ҫитессĕн Михаҫа сăмахĕсене илтсе ҫарăнать*).

Михаҫа. Ха-ха-ха!.. Таси паха, кăссамул!.. Сан сыснасене паранкă ҫитермелле, улахра ҫӳремелле мар! Ха-ха-ха! (*Пикавайăх ку сăмахсене илтсен тӳсеймесĕр ҫарăнать*).

Макҫăм. Ан кар, ан кар ҫаварна ытлашши, асту: ырри пулас ҫук! Вăл сана нимĕн те каламарĕ вĕт, ес мĕншĕн ăна машкалатăн!

Райкка. (*ҫарса*). Айта ҫасрах, ан ҫыпăҫ, Микула. (*Пикавайăх ҫĕнмесĕр тăрать, каймасть*).

Пикавайăх. Пуҫланăскерне каласах пĕтер ĕнтĕ, йулташ.

Михаҫа. Еп сан йулташ мар, ав (*Макҫăм ҫине тĕл-*

*лесе*) сан йулташу ним тума аптраса шӑлне ҫыртса тӑрат̆ха. Пырса пулӑш ҫавна!.. Ха-ха-ха!..

Пикаваййӑх. Тӗрӗс калатӑн, ес ман йулташ мар... Анђах епӗ хӑраканнийех мар, сирӗн пек хуликансем валли пирӗн урӑхла саккун пур. Тата тепӗр сӑмах каласа манӑн йата хурласассӑн, еп сanпа урӑхла калаҫа пуҫлатӑп.

Михађа. (*Сиксе тухса*). Мӗнле, мӗнле тетӗн ес? Хуликан тетне ха ес мана?.. Тата мӗнле йат парас тетӗн, калаха?..

Максӑм. Татаи? Кулак, харам пыр!

Михађа. Хуликан, кулак, харам пыр!.. Тата мӗн калатӑр?

Максӑм. Аҫу пек, йалти хӗрсене пӑсса пурӑнатӑн!..

Махађа. Санӑн та пӑсасђӗ те, пӑстармаҫҫӗ! Хе-хе-хе... Ну, мӗн ђарӑнтӑр, йе каласа пӗтри?

Максӑм. Ађасем!.. Мӗн йалан епӗр кулаксен мӑшкӑлӗ пулса пурӑнатпӑр!.. Тавай тытса пӗҫерер ҫавна!!..

Михађа. (*Ђупса пырса Максӑма йарса илет*). Ытла ђас пӗҫерешӗн!.. (*Мӑйран тытса пӑват, Пикаваййӑх тьарма пырасшӗн*).

Пикаваййӑх. Йулташсем, мӗншӗн есӗр Максӑмшӗн пӗри те хута кӗместӗр?.. Йе кулакран хӑратра?..

Ађасем. Тытӑр!.. тытӑр!.. (*Ђупса пыраҫҫӗ*).

Михађа. А-а!.. Еппин есӗр пурте комсомоьтсӑ майлӑ пулас тетре?.. (*Сиксе тӑрса стел ҫинтьи ҫӗҫҫе йарса илет те, пукан ҫине хӑпарса тӑрат*). Ну, кам килсе тытас тет,—тытӑр! (*Ҫӗҫҫине ҫӗклесе тӑрат, ађасем хӑраса тараҫҫӗ; Пикаваййӑхпа Максӑм ҫех йулаҫҫӗ*)

Максӑм. (*Сасартӑк пуканпа персе Михађана ӳкерет те, тьупса пырат*). Аха!.. Ђиктерем сана ҫӗҫӗпе!..

Пикаваййӑх. (*Ҫӗҫҫине илме тьупса пырат*) Прах ҫӗҫҫе!.. (*Пӑртак тӳпелешсен, Михађа Максӑма айаккинтьен сирпӗтсе йарат те, Пикаваййӑха ҫӗҫӗне тьиксе прахат, вара тухса тарат*). А!.. (*Ӳкет*).

Максӑм. Тытӑр ӑна, тытӑр!.. (*Хыҫалтан тьупат*).

Райкка. (*Ним тӑваймасӑр тӑнӑскер, тьупса пырса Микула ҫине йӗре-йӗре ӳкет*). А!.. Микула!.. ~~Йун йухатске какӑрунтан!~~..

(*Ђаршав*).

## IV-мӗш пайӗ.

[*Райкка килӗнтье. Пикаваййӑх сак ҫинтье ҫыврат. Райкка амӑшӗ* (*Кӗтерук*) *ун ҫине пӑхса шухӑшласа тӑрат*].

### 1-мӗш курӑнни.

Ктерук (*шухӑшлӑ*). Ех, ађам, кунта килмесӗр вилӗм тупаймарӑнши?.. Вӑйсӑрланса ҫитрӗ, тӳрленес ҫук... (*Патнерех пырса витет*). Ытла та асаплӑ ҫыврат̆. ашшӗ-амӑшӗсем мӗн шухӑшлаҫҫӗши килӗнђе? Ађи ҫапла асапланасси пуҫра та ҫук пулӗ... Мӗн ҫитменши, ҫынна ҫӗҫӗпе ђикме мӗнле алли ҫӗкленнӗши ҫав Михађан? Ах тур, тур, тур! Ывӑлӗ ашшӗне пӑхат̆ тесе, ахаљ каламан пуљ ҫав ваттисем...

### 2-мӗш курӑнни.

(*Райкка хыпаланса кӗрет те, кӗрӗкне хывнӑ хывман стел ҫине выртса шӑппӑн йӗре пуҫлат*).

Ктерук. (*Райкка патне пырса*). Ҫук пулӗ ҫав, пулаймаст̆ пулӗ... Мӗн терӗха тухтӑр?

Райкка. *Хыттӑн йӗрсе йарат*). Ан ыйт, анне...

Ктерук. Йӗрсе те ним тума ӗнтӗ, хӗрӗм... Лӑплансам (*Атьашлат*).

Райкка. Анне, еп илсе килесшӗн пултӑмҫке ӑна... Тен ӑна мар, урӑххине суйлађђӗҫ...—Еп уншӑн ҫине тӑтӑм, мӗншӗн тесен еп ӑна нумайранпа хамӑр патра илсе килсе кӑтартма асӑннӑ... Ҫакна кӑтартма илсе килтӗмҫке, анне, хамӑн савнине!.. (*Йӗрет*).

Кӗтерук. Йуратсах йурататни вараес ӑна, хӗрӗм?

Райкка. Йуратмантан йӗретӗпши, анне...

Ктерук. Пулнӑ ӗҫе йӗрсе тӳрлетес ҫук, хӗрӗм, ан йӗр... Тен тӳрленӗха... Тухтӑрсем турӑ мар вӗт, ҫтан пурне те пӗлсе калађђӑр...

Райкка. Ҫук, анне, тухтӑрсем «йывӑр» тесе калани «вилет» тенипе пӗрех... Епӗ хамӑр тухтӑра лайӑх пӗлетӗп, вӑл мана хӗрхенсе ҫех—«тен тӳрленӗ»—терӗ.

Кӗтерук. Тен ђӑнахах та тӳрленӗ; ан йӗр, Райкка. (*Райкка тата хытӑрах йӗрет, ӑна илтсе Микула вӑранат*.

Пикаваййӑх. (*Аран калат*). Райкка, мӗншӗн йӗретӗн?

Райкка. (*Тӑрса тьупса пырат*). Ах, савни, саншӑн йӗретӗп.

Пикаваййӑх. Ей, тупнӑ камшӑн йӗрме!.. Ленииншӑн макӑрман, пирӗн пек комсомолӗссемшӗн куҫҫул кӑларма та намӑс... Лархa ман ҫумма... Каласар... Епӗ аван тӗлӗк куртӑм: ђӗрӗлнӗ пек, санпа пӗрле пӗр шкулта уђитлӗре пек... Ав мӗнле тӗлӗк курнӑ епӗ! Каниккул пӗтнӗ ҫӗре тӳрленетӗп те, фронтран таврӑннӑ пек шкула пыратпӑр. Хе-хе-хе! (*Кулма хӑтланса ӳсӗрме пуҫлат те, сывлӑш ҫитмесӗр аптраса, калама тьарӑнат*).

Райкка. Микулай, сана тухтӑр нумай калаҫма хушмарӗ, ав мӗнле кансӗр сана...

Пикаваййӑх. Ниђђево! Иртет вӑл... Вӑл калаҫнипе мар, ӳсӗрнипе пулђӗ... Ну, вот... Шкула таврӑнсан хамӑр ӗҫлени ҫинђен отђот туса паратпӑр... Анђах, йађђейккӑра пире ырлаканах пулаймарӗ: хӗрсемпе сурӑх ури тытса ҫӳренӗ, тейӗҫ... Хе-хе-хе!..

Райкка. Уншӑн епӗ ответ паратӑп, есӗ мар, Микула, мӗншӗн тесессӗн епӗ сана ђӗнтертӗм.

Микула Ҫук, ес мар, епӗ хам кайнӑ... (*Кӑшкӑрат*). Еп вӗсене хам тӗрӗссине кӑтартӑпха!.. Пӗр-ик кулак пӗтӗм йала хӑратса тӑраҫҫӗ... Курман пулсан отђотпа мухтанни ҫех пулат̆ђӗ: йалта пит аван пурнаҫҫӗ, кирек мӗнле пусӑ тума та хатӗр, теттӗмӗр... Халӑх ҫинђе пурте пирӗн майлӑ пек, вӑрттӑн ҫӗртре—пӗрне пӗри вӗлерме хатӗр!.. Пӗр ҫынна вуннӑн хирӗҫ тӑма хӑраҫҫӗ!.. (*Кӑшт сывласа*). Ҫав ӗнтӗ... Манӑн ӗнер касхине хутшӑнмалла марђђӗ пулӗ, анђах... (*сасартӑк*). Ҫук!.. Епӗ тӗрӗс тунӑ!.. Епӗ пулмасан леш хуликан Максӑма вӗлеретђӗ!.. Нуи ађасем те: пӗр хуликанран вуннӑн хӑраҫҫӗ, пӗри те Максӑма пулӑшасшӑн мар.

Райкка. Максӑм вӑл пирӗн куккасӗн ађи... Пӗр кун унӑн ашшӗне, халӑх ҫинђе Максӑм пулмасан вӗлеретђӗҫ те пулӗ...

Пикаваййӑх. Кам?

Райкка. Ӗнерхи хуликанан ашшӗ, Макар пиђђе.

Пикаваййӑх. А-а, унтаҫке вӗсем ӗнер ҫапӑҫма пуҫларӗҫ, еп кукӑљшӗн, тесе... Райкка, ес мӗнле шухӑшлатӑн: епӗ тухса тарнӑ пулсан аван пулађђӗши.

Райкка. Нимӗн калама та аптратӑп.

Пикаваййӑх. Епӗ кайнӑ пулсан, вӑл ман ҫинђен темӗн те каласа пӗтерећђӗ, тен ађа пӑђасем те унӑн майлӑ пулат̆ђӗҫ, Максӑма ҫӑвар уҫма та памасђӗҫ. Еп хаљ те тепле тӳсрӗм? «Сан сыснасене паранкӑ ҫитермелле», тесессӗн, манӑн пӗтӗм ӳт ђӗтре пуҫларӗ. Енђен алӑра пӑшал пулсассӑн, епӗ нереттӗм пулмалла: темӗн ђул хама хам ђарас тесен те ђармалла мар,

пуç мими урăхла ĕçле пуçларĕ... Епĕ, Райкка, çапла шухăшлатăп: комсомолĕс мар пулсассăн, çĕçĕ йăне пулас çукђĕ, хирĕç тараттăм... Епĕ çĕççине тытса илсе вăрçа ђарасшăнђĕ, анђах вăл вăйлăскер, аллине вĕçертсе, хама ђиксе пăрахрĕ (*Йăвăррăн сывласа илет*). Еп хама хам тытма пĕлместĕп, Райкка. Шкулта та, пĕр çилленсен, тем те туса пăрахас килет... Çав ĕнерхи хуликан йунĕ çукши ман ăшра?.. Хе-хе-хе!.. Тен манăн атте те пĕр-пĕр хуликан пулнă?.. Пĕлме çук... Аттепе анне çинђен мана прийутра никам та каласа паман... Вăл тепĕр тесен аван: комсомолĕсĕн хайар та, йăваш та пулма пĕлес пулат̆... Çапла вĕт, Райкка... (*Райкка çине пăхса*). Ес мĕн, Райкка, пит хуйхăрса ларатăн вара?.. Тухтăр вилет темерĕ пулĕçке ман çинђен?..

Райкка. Ой, мĕн аташатăн ес, Микула?.. Вăл тўрленет терĕ. (*Хăй йĕрсе йарат*).

Пикавай йăх. Тўрленет тенĕ пулсассăн, есĕ йĕмĕттĕнђĕ... Ну, йурĕ: вилсен вилетĕп, ђĕрĕлсессĕн... О! вара епĕ ĕнерхи хуликансемпе мĕнле калаçмаллине ... тĕмђĕ!.. Çук, еп вилместĕп!.. Йалти хуликан пĕле... ех вилме—ытла намăс!.. Вилес пулсан — çĕççин... мпе вилес, комунисла!.. Кун пек сурхури ђаплă ви... —йал кулли анђах!.. Еп ђĕрлетĕпех, ĕçкинђе ви... ђĕрлетĕп!...

Вилместĕп, Райк... а! (*кăшкăраща сывлăш çиттменнипе антраса ўкет*.)

Райкка (*Пăхса тă... са*)... Микула, Микула!.. Каллех тăнтан ўкет... Анне, ... чилсе кайми, аран сывлат̆çке... çавна, Райкка... Емелне пар

Ктерук. Ан йумахлаттар ... йкка емелне ĕçтерет). та, кунта килте лар... (*Ра... а ларат.*) Нийепле те

Райкка. (*Амăш патне пыр...* ...?.. ђĕртме çуким ĕнтĕ çавна, анн... х пуђ çав, хĕрĕм:

Ктерук. Вилес йапала вилет... таранђђен пиђђе- ђĕртме çук пулĕ... Ах, Райкка, ку... чĕ, сана каласа рен урăх никама та каламанђђĕ ... парас пулĕ?

Райкка. Мĕн апла анне? ... лĕ ши?

Ктерук. Ку ађа та Пикавай куллийех пу... тăн ес?

Райкка. Мĕнле Пикавай?!. Кам çинђен кал... хама та

Ктерук. (*Шăппăн*) Итле, хĕрĕм, анђах ни... ĕмĕре ан кала. Пиккавай йађĕ манăн пуçа шуратрĕ, ...ика-те кĕскетрĕ... Ĕлĕкех авал, пирĕн йалта пĕр ... ка-вай йатлă тĕне кĕмен ђă аш пулнă, тет. Çав Пи... вай пĕтĕм таврари ђăвашсене хăратса пурăннă, тет. Çапла каласа кăтартат̆ђĕç пире асаттесем. Михађа ашшĕ, Макар, çав Пикавай йăхĕ пулса тăрат̆. Макарăн та алли тасах мар, Михађа та çавăнпа ашшĕне хунă пулмалла: Пикавайăн йунне çак ађа çинђе кăтартрĕ.

Райкка. Унăн ашшĕ те çынна вĕлермĕши апла?

Ктерук. Пулнă çав хĕрĕм, пулнă.

Райкка. Кама апла?!

Ктерук. Хăйĕн «савнин» ађине.

Райкка. Савнин ађине?!

Ктерук. Ăна пĕр хĕр йуратнă. Вăл çав хĕре: „саватăп, йурататăп“ тесе пурăннă. Ађах хĕрĕ йăвăр çын пулсассăн, прахнă... Урăххине илнĕ те, савнин ађине таçта кайса ђикнĕ, никама та пĕлтермен. Хĕрĕ те намăсран хăраса пытарса усранă, пĕр пиђђĕш çех пĕлнĕ.

Райкка. Ађине никам та кайран тупайман?

Ктерук. Çук. Хĕрĕ, намăс пĕрле пултăр тесе, ађине тўррин килне кайса пăрахнă. Вĕлерсе çта та пулса кайса прахсассăн, тупаканĕ пĕлтĕр тесе, хĕрĕ, ађи кипки ăшне хут çырса хунă: „Пикавай йăхĕ Макар ађи“, тесе...

Райкка. (*Интересленес*). Пикавай йăхĕ?.. Макар ађи?.. Анне, хĕрĕн йатне пĕлместĕни?

Ктерук. Телейсĕр Ктерук йатлă (*Йĕрет*).

Райкка. А!.. Есĕи?.. Анне, сана улталанăи?

Ктерук. (*Ђарса*). Ан шавла, ађаш, çынсем илђĕç... (*Йĕрет*).

Райкка. Пўтсĕр йăх!.. Еппин Михађа та çав пут̆сĕр Пикавай йăхĕнђенех пулат̆!..

Пикавай йăх. (*Ăна илтсе*) Мĕншĕн, Райкка, пирĕн йăха хурлатăн?.. Йе еп сана усал тунăи?

Райкка. А!.. Микула!.: (*Ђупса пырса*) Ђасрах калаха: мĕн йатлă санăн аçу?

Пикавай йăх. Макар...

Райкка. Макар!?... (*Хыттăн Микула çине выртса йĕрет*).

Пикавай йăх. Ан йĕр, Райкка. Комсомолккăна макăрни килĕшмест.

Райкка. (*Йĕрсех ыйтат*). Анне, хăçан пулнă вăл ĕç?

Ктерук. Вунсакăр çул çитет!..

Райкка. (*Амăш патне ђупса кайса*). Анне!.. Пырса пăхха тен сан ывăл мари манăн савни?

Ктерук. Ан аташ, хĕрĕм, ăна вĕлерни те 18 çул ĕнтĕ. (*Микула патне пырат*).

Пикавай йăх. Мĕн аташатăр есĕр? Мана хăвăр ађăр тăвас теместĕр пулĕ çке, инке?

Кĕтерук. (*Сасартăк тур паллине курса*). А!.. Тур палли!.. Манăн ађан сулахай пит çăмарти çинђе пысăк тур палли пурђђĕ... Райкка, хĕрĕм, ђăнах та ку санăн пиђђў пулђешим?

Райкка. (*Микула çине выртса*). Пиђђе!.. Пиђђе пулмасăр, анне?..

Ктерук. (*Пикаваййăха*) Ађам, миçе çулта есĕ?

Пикавай йăх. Вунсаккăрта, инке... Аттене курман, йађĕ унăн Макар, йăхĕ Пикавайăн.

Райкка. Анне, унăн хушамађĕ те Пикавай йăх. Пиђђе! Пиђђе!.. (*Ђĕркуçленсе ыталат*).

Ктерук. Ех телей!.. Вунсакăр çултан хамăн ывăлăма курма телей пулђĕши?.. Ах ывăлăм, хисеплĕ хăна тăваймарăмăрçке сана!.. (*Йĕрет*) хĕпĕртенипе куççуђ тухрĕ...

Пикавай йăх. Анне!.. Ђăнахах есĕ манăн аннеши?.. Ах, ку йата епĕ ђи пирвайхи хут калатăпçке... Анне, кил ыталам сана!.. Йăмăк, лартăр мана пĕрле.. Лартăр!.. (*Хăпарса ларат*).

Райкка. Çук, çук!.. Сана ларма йурамаст̆!..

Пикавай йăх. Йурат̆!.. Манăн хађ вăй пур!.. Ларма мар, епĕ тăма та пултаратăп хађ... Ах аван çке йăмăкпа анне хушшинђе ларма!.. (*Ўсĕре пуçлат те, каллех вăйсăрланса ўкет*).

Райкка. Каларăм сана, ларма йурамаст̆ тесе, пиђђе...

Ктерук. Ну, ђим!.. Хађ ашшĕне кайса ђĕнемха. Куртăр камăн ађи лайăххрах—унăни, йе манăн! (*Тăрса кайма тăрат*).

Райкка. Анне, çта кайатăн есĕ?

Ктерук. Ашшĕне ђĕнсе килетĕп, паллайат̆и хăйĕн ывăлне? Спаççипă ăна: çапах ывăлне вилмелле туман. (*Кайма хатĕрленет, кĕрĕк тăхăнат*).

Райкка. Ун пек ашшĕне епĕ ура йарса пустармăттăм хам пулсан, анне, ес çапах ђĕнесшĕн.

Ктерук. Ыйтса пĕлес, çта пăрахнă вăл, ăна тата ывăлĕ умĕнђе намăслантарас. Кайса ђĕнетĕп. Пулнă пулнах: вунсакăр çул ура йарса пусманђђĕ—кайса кĕресха халĕ, мĕнле йышăнĕ? (*Кайат*).

Пикавай йăх. Еп хама хам ĕненместĕп: ђăнах епĕ сан пиђђĕши, йе ес манăн савниши?..

Райкка. Ес манӑн савнӑ пиђђе, Микула.

Пикаваййӑх. Манӑн хӗпӗртенипе нимӗн те ыратмаст̆, тӑрса ташлас килет. Ташлами?

Райкка. Ташлас терӗ, вырӑн ҫинђе лараймаст̆...

Пикаваййӑх. Ку инттереслӑ пулат̆! (*Кулкаласа*). Ӗнтӗ шкула пырсан йађђейкӑра иккӗн токлат тӑватпӑр: сурхури ӗҫки хыҫҫӑн пиђђӗшпе йӑмӑкӗ мӗнле паллашни ҫинђен, амӑшне мӗнле шыраса тупни ҫинђен. Тата мӗн каламаллаши?..

Райкка. Шалнӗ пиђђӗшне ҫӗҫӗпе йепле ђикни ҫинђен мантӑнтаи ӗнтӗ?

Пикаваййӑх. (*Сасартӑк хӑраса*). Шӑлнӗ?!.. Кам ҫинђен калатӑн есӗ?

Райкка. Ӗнерхи хуликан ҫинђен.

Пикаваййӑх. А! Вӑл манӑн шӑллӑми?!.. Шӑлнӗ пиђђӗшне ҫӗҫӗпе ђикнӗ?!.. (*Кӑшт хӑпарат, ҫав вӑхӑтра Михађа кӗрет, унӑн аллисене хыҫалалла туса ҫыхнӑ; унпа пӗрле Мақҫӑм кӗрет*).

### 3-мӗш курӑнни.

(*Макҫӑм пуҫне ђиксе хурлӑхлӑ кӗрет*).

Райкка (*тӑрса*). А!.. Вӑл кунта килђӗ тата?—

Пикаваййӑх. Кам?!.. (*Хӑпарса*) А!.. Ӗнерхи хуликани?.. (*Михађана*) Мӗн кирлӗ сана?

Михађа. (*Йерипен*). Еп каҫару ыйтма килтӗм... Мана пурӗ пӗр хупаҫҫӗ, анђах манӑн каҫару ыйтмасӑр кайас килмерӗ... ӳсӗрпе ӗнерхи ӗҫ пулђӗ ман, йулташ...

Пикаваййӑх. (*Михађа сӑмахне татса*) Ха-ха-ха!.. Йулташ!.. Ӗнер епӗ сыснасене паранкӑ ҫитерекеннађђӗ, пайан йулташ?!.. Ха-ха-ха! . Ыттисем те ӳсӗр пулнӑ та, мӗншӗн ҫӗҫӗпе хирӗҫ тӑман сана,-е?!.. Ҫук, есӗ урӑ пулнӑ пулсан та, пурӗ пӗр ҫӗҫҫе йарса илеттӗн!.. Сана пӗрре каҫарсан, есӗ тепре тӑватӑн!.. Каҫармастӑп!.. Телейсӗр амӑшӗн ађи телейлӗ ашшӗн ывӑлӗпе пӗрлешме пултараймаст̆!.. Каҫарма мар, епӗ тӗтӗм Пикавай йӑхне ылханатӑп!.. (*Ӳсӗрсе антраса ӳкме пуҫлат, ӑна Райкка тытат*).

Райкка. Мӗн тума килнӗ есӗ, Михађа?.. Йе ӗнер ҫӗҫӗпе вӗлерейменнине пайан сӑмахпа вӗлерес терӗни?.. Кай, вӑл сана каҫарас ҫук!..

Михађа. Райкка, тархасласа тилмӗретӗп: каҫарӑр, мӗншӗн тесессӗн каҫарманни манӑн пуҫа тӗрмерен ытла ҫийет... Ак Макҫӑм та малтан хурал пӳртӗнђен кӑларасшӑн марђђӗ, кайран ҫапах хӗрхенђӗ.

Макҫӑм. Ҫук!.. Еп сана хӗрхенсе мар кунта килме ђармарӑм, комсомолӗсӑн йулашки сӑмахне илттӗр терӗм.

Пикаваййӑх. (*Ҫӗнӗрен хӑпарат*). Йурӗ!.. Манӑн сӑмахсене илтес килет пулсан илтӗр... Комсолӗс икӗ тӗрлӗ шухӑшламаст̆: ун умӗнђе пӗр пысӑк ӗҫ ҫех— тӗттӗм халӑха ҫутта кӑларса ҫӗнӗ йӗркепе телейлӗ пурӑнма вӗрентес ӗҫ тӑрат̆. (*Хытӑрах каласа хӑпарса ларат*). Унӑн йулташӗсем—малта пыракан йалти ђухӑнпа вӑтам хресђенсем, унӑн тӑшманӗ—пуйанпа куштансем. Вӑл вӗрентнине хирӗҫ пыракансене каҫару ҫук!

Михађа. Анђах каҫарсассӑн, епӗ тӳрленме пултаратӑп.

Пикаваййӑх. А!.. Каҫарсассӑн тӳрленме пултаратӑн, каҫармасан мӗн тӑватӑн ес?! Е?!.. (*Тӑрат, ӑна Райкка тытат*). Йе ҫӗнӗрен йалти ҫынсене алла ҫавӑрса илес тетне?.. Ҫук!.. Ес тӗрмерен тухнӑ ҫӗре халӑх урӑхла пурӑнма пуҫлат̆!.. Куштансен пурӑнӑҫӗ ӗмӗрлӗхе пырас ҫук! . Вилес умӗн ыйтсан та епӗ каҫарас ҫук, мӗншӗн тесессӗн — сирӗнпе пирӗн хушӑра пӗрлешӳ ҫук!.. Хут̆ те ес манӑн тӑван пул, пурӑпӗрех сана каҫарас ҫук! Ан ыйт манран каҫару?!.. Кай тухса!.. Кай кунтан!.. Каҫармастӑп! Ка-ҫар-мастӑп!... (*Ӳкет, пӑртак тӑрсан вилет*).

Райкка. (*Ун умне ђӗркуҫленсе*), Ах!.. Сывлаймаст̆!.. Пиђђе!.. Пиђђе!.. (*Ӳксе йӗрет*).

### 4-мӗш курӑнни.

(*Ктерук хыпаланса кӗрет те, кӗрӗкне хывать*).

Ктерук. Мӗнле ҫынсем кунта?.. Райкка, мӗн йӗретӗн?

Райкка. Анне, санӑн телейсӗр ывӑлу вилђӗ!..

Ктерук. Вилнӗ?!.. Шӑлнӗпе ашшӗ кулли пулма ҫуратрӑмши сана, ывӑлӑм!.. (*Ывӑлӗ пуҫ вӗҫӗнђе хыттӑн йӗрет*).

Михађа. Шухӑшламан ҫӗртен вӗлертӗм! Кам пур ман пек ђунсӑр етем?

Ктерук. Ех, Михађа, пиђђӳне ђикме йепле сан аллу ҫӗкленнӗ?

Михађа. (*Тӗлӗнсе*). Пиђђене?!..

Ктерук. Пиђђӳне пулмасӑр!.. Ҫта ашшӗ, мӗншӗн кӗмест вӑл, йе пӑрахса тарђӗи?.. Ђӗнха ӑна, Макар, кунта!

### 5-мӗш курӑнни.

(*Макар йерипен кӗрет*).

Ктерук. А-а!.. Килтӗне ађуна курма? Пӑх! лайӑххрах пӑх!.. Ҫав турпаллине астумастӑни, санӑн ывӑлу мари, — шӑллӗн кулли пулса вилђӗ?.

Макар (*кӑшт пырса пӑхса*) Турпаллине астумастӑп анђах ађуна ху аллупа ху пӑвса вӗлернине лайӑх астӑватӑп. (*Вара тепӗр йӗнелле кайса тӑрат*).

Ктерук. (*Тискерӗн, шӑппӑн пуҫлат*). Ах, кашкӑр!.. Тунатӑн!.. Ывӑлу умӗнђе тунатӑн!.. Ну йурӗ!.. Пикавай йахӗ те ӗмӗрлӗхе пырас ҫук! Хӑҫан та пулсан сире те ҫӗр ҫӑтӗха! Ав санӑн ывӑлу — ӳснӗ-ӳсмен пусма вӗренђӗ!.. Маттур, Пикавай йахӗ!.. Пусӑр ыттарах! Пусӑр пӗрне пӗри, сирӗн пӗтесси курӑнса тӑрат̆!.. (*Макара кусран пӑхса тӑрат те, сасартӑк ӑсран кайса кӑшкӑрат, Райкка ӑна пырса тытат*). А!.. А!.. Хӑвалӑр ман ҫуртран Пикавайсене!.. Хӑвалӑр ашшӗне хайӗн ывӑлӗ патӗнђен!.. Хӑвалӑр!.. Хӑвалӑр!.. Ах-ха-ха-ха! (*Ывӑлӗ ҫине ӳкет, Райкка амӑшне ыталат*).

Михађа. Ех, атте!.. Ђанахах епӗ ашшӗ пек пулнӑ мӗн... Ну, йурӗ!.. Илсе кайӑр, хупӑр... Сывӑ пул «ырӑ атте». (*Ҫавӑрӑнса йерипен кайат, ашшӗ пуҫне ђиксе тӑрат; Ктерук йӗрет; йерипен ђаршав хупӑнат*).

*Ђаршав. Вӗҫӗ.*

# ЛИТТЕРАТТУРӐ ПУРНӐҪӖ.

## ВИҪҪӖМӖШ УТӐМ.

**(Ђӑваш пролеттари писсаттӗлсен «Канаш» сойусӗн 3-мӗш сиесӗ творђества ыйтӑвӗсем ҫинђен).**

Июнӗн 1-мӗшӗнђен пуҫласа виҫӗ кун хушши Шупашкарта ђӑваш пролеттари писсаттӗлӗсен «Канаш» сойусӗн виҫҫӗмӗш сиесӗ пулса иртрӗ. Сіеса «Канаш» сойусӗн пур крушокӗсенђен те телекатсем килнӗ. Вӗсемсӗр пуҫне тата сиеса Пӗтӗм Сойусри пролеттари писсаттӗлсен ассотсиатсинђе (ВАПП) тӑракан ђӑваш писсаттӗлсен ҫексисенђен те, («Канаш» Сойусӗнђе тӑманнисенђен) претставиттӗлсем килнӗ. Сиесрах тата уйрӑм писсаттӗлсем, ђӑваш ђӗлхине лайӑх пӗлекен ђӑвашран тухнӑ вӗреннӗ ҫынсем, йалсенђе хађтерех кӑна пуҫланнӑ литтераттура крушокӗсенђен килнисем т. ыттисем те ђылай пулђӗҫ. Пӗр сӑмахпа каласан, виҫҫӗмӗш сиесра пулнӑ телекатсем ђӑваш ӗҫхалӑхӗн пур сийӗсене те—сухапуҫӗ ҫумӗнђисенђен пуҫласа наукка ӗҫӗнђе ӗҫлекенсем патне ҫитиђђенех,—кӑтартса тӑнӑ теме пулат̆.

Виҫҫӗмӗш сиес пухӑннӑ хӑхӑт «Канаш» Сойусӗн малтанхи сиесӗсем пулса иртнӗ вӑхӑтсенђен Совет Сойусӗн политтӗклӑ пурнӑҫӗ тӗлӗшӗнђен те, хуҫайствӑллӑ пурнаҫӗ тӗлӗшӗнђен те уйрӑмрах выран йышӑнса тӑрат̆. Виҫҫӗмӗш сиес—Совет сойусӗ хайӗн ҫӗршывӗнђе сотсиалисӑма хӗрсех тунӑ ђухне, тулашӗ йенђен—ӑна капитталиссем питӗ ђӑрсӑр ђӑрмантарса тӑнӑ вӑхӑтра пулса иртрӗ. Ҫавӑнпа та сиес хайӗн ӗҫӗнђе ҫак политтӗклӑ ыйтусене астумасӑр иртсе кайма пултараймарӗ. Сиесӗн тӗп ыйтӑвӗсем—Совет Сойусӗнђе пурӑнакан вак халӑхсенђен пӗрин, ђӑвашсен, куђттурӑ никӗсӗсене тӗреклетме,ђӑваш халӑхӗн итеолокине илемлӗ литтераттурӑ урлӑ сотсиалисӑм тӑвакан клас итеолоки йенне ҫавӑрма меттӑтсем шырани тавра ҫуталса пыђӗҫ. Ҫапла ӗнтӗ капитталиссем Совет Сойусне тулашӗнђен тапӑнас тенӗ вӑхӑтра, ђӑваш писсаттӗлӗсем ӑна шал йенђен тӗреклетес, ҫирӗплетес тесе мелсем шырарӗҫ.

Ку йапала Ђемперленсен ноттисене хирӗҫ вирлӗ ҫупкӑђ пулса тӑрат̆.

Виҫҫӗмӗш сиесӗн ӗҫӗсене илсе пӑхсан, вӗсенђе пуринђен ытла творђӑства ыйтӑвӗсем пысӑк выран йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ку йапала истори тӗлӗшӗнђен те выранлӑ пулма тивӗҫлӗ. Пӗрремӗш сиесӗн тӗп ыйтӑвӗ—ђӑвашсен уйрӑм писсаттӗлӗсене пухса вӗсен ӗҫне орканисатсилесси. Иккӗмӗш сиес орканисатсиленнӗ ђӑваш писсаттӗлӗсене Совет Сойусӗнђи ытти писсаттӗлсен ҫемйине кӳртме хушса хӑварђӗ. Хађ ӗнтӗ, виҫҫӗмӗш сиес хыҫӗнђен, епӗр хамӑр литтераттурӑна, орканисатси тӗлӗшӗнђен кӑна мар, творђӗства тӗлӗшӗнђен те Совет Сойусӗнђи халӑхсен литтераттурипе ҫыхӑнтарма тытӑнатпӑр. Ҫак тӗлӗшрен пӑхсан пирӗн 3-мӗш сиес «Канаш» Сойус историнђе уйрӑм паллӑ выран йышӑнса тӑрат̆.

Творђӗства ыйтӑвӗсем пирки сиес ҫаксене каласа хӑварђӗ: 1) пирӗн литтераттурӑна сотсиалисӑм тӑвас ӗҫе пӑхӑнтармалла, 2) ҫавӑн пек литтераттурӑ тӑвас тесен пирӗн вӗренмелле, 3) литтераттурӑри оппӑтсене, литтераттурӑ пурнӑҫӗнђе пулакан йӑнӑшсене асӑрхаса пыма криттӗккӑна вайлатмалла. Творђӗства ыйтӑвӗсене сиес ҫак тӗп виҫӗ ыйту ҫине пайласа сӳтсе йаврӗ. Вӗсене уйрӑм пӑхса тухӑпӑр.

**Мӗнле литтераттурӑ кирлӗ.**—Тӗп шухӑшӗ йенђен—ђӑваш ӗҫхалӑхӗн итеолокине сотсиалисӑм тӑвас шухӑш йенне ҫавӑрни, сотсиалисӑм тунӑ ҫӗрте ӑна пулӑшни; формӑ йенђен—литтераттурӑна хађхи пурнӑҫпа килӗшекен тум тумлантарасси.

> „...Классен ҫапӑҫӗвӗн формисем улшӑнса пыраҫҫӗ. Клас ҫапӑҫӗвӗн формисем улшӑнни илемлӗ литтераттурӑн сӑнсӑпађӗнђе палӑрмасӑр йулма пултараймаст̆.
>
> (Ҫеливански йулт. токлатӗнђен)

Ку сӑмахсем пит те тӗрӗс. Кирек йепле происветени те тӗп шухӑшсӑр пулма пултараймаст̆. Тепӗр йенђен Классен кӗрешӗвӗнђи вӑхӑтра ҫак тӗп шухӑш хайне уйрӑм, пимӗнпе ҫыхӑнса тӑмасӑр пулма пултараймаст̆,—вӑл хӑш йенђен те пулсан кӗрешекен классенђен пӗрне йурӑхлӑ, тепӗрне йурӑхсӑр пулат̆. Ҫапла пулнӑ пирки вӑл пӗрне пулӑшат̆, тепӗрне хирӗҫ пырат̆. Ҫаксене аса илсе ђӑваш литтераттурӗ ҫинђен калас пулсан ку тӗлӗшрен пӗрре те икӗ тӗрлӗ сӑмах пулас ҫук. Ун пирки ҫакна анђах асӑнма тивет:

> „Пирӗн литтераттурӑ ӗҫхалӑхӗшӗн пулмалла, ӗҫпе пурӑнакан халӑх пурнӑҫпе йусама тӑрӑшмалла, ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвас ӗҫе пахӑнмалла“
>
> (Солӑттӑв А. токлатӗнђен)

Тӗп шухӑш йенђен пирӗн писсаттӗлсен ђӑваш ӗҫхалӑхне ҫакӑн пек происветенисем памалла.

Формӑ тӗлӗшенђен сиес ҫакна каларӗ: пролеттари литтераттуринђе пирӗн паллӑ уйӑрса хунӑ формӑсем ҫук, епӗр никама та есе ҫак формӑпа ҫыр тесе калама пултараймастпӑр. Хађхи вӑхӑт пирӗн—ӗҫхалӑхпе ђи йурӑхлӑ формӑсем шыранӑ вӑхӑт. Анђах кирек йепле тӗп шухӑша та формӑ парса тумлантарас пулсан, кашни писсаттӗлӗнех хайӗн тӗп шухӑшне килӗшекен формӑ парас пулат̆. Ђи аван происветени—тӗп шухӑшпа формӑна ђи аван, ђи вӑхӑтлӑ, ђи килӗшӳллӗ виҫепе ҫыпӑҫтарнӑ происветени пулат̆ терӗ сиес. Ҫакна ђӑваш писсаттӗлӗсен йаланах асра тытса тӑмалла.

**Вӗренес тӗлӗшрен** сиес хайӗн сӑмахне питӗ татӑклӑ каласа пађӗ. Сиес: ђӑваш писсаттӗлӗсен вӗренмелле, вӗренмелле, татах та вӗренмелле, терӗ. Ђӑнах та, пирӗн вӗренмеллӗх. Епӗр литтераттурӑ ыйтӑвӗсемпе пиҫӗхнӗ ҫынсем мар. Епӗр литтераттурӑ пурӑнӑҫне тин анђах кӗрсе пыратпӑр. Ҫитменнине тата литтераттурӑ пирӗн писсаттӗлсемшӗн тӗп происвотств̆ та мар—пирӗн писсаттӗлсенђен ђи пысӑк пайӗ сухапуҫ хыҫҫӑн утса ҫӳрет. Ҫавӑнпа епӗр литтераттурӑ ыйтӑвӗсене, унӑн ӑсталӑхне пумайӗшне хамӑр пӗлнӗ пек анђах туса пыратпӑр. Паллах, ку ҫителӗклӗ мар. Пирӗн вӗренесех пулат̆. Анђах камран, мӗнле вӗренмелле?

> „Хађ анђах ӳсме пуҫлакансен ђи малтан ђӑваш ђӗлхине тӗплӗнтерех вӗренсе ҫитсе, ђӑваш ђӗлхин ҫаврӑнӑшӗсемпе илемлӗхне ђӑвашсен халӑх пултарулӑхӗнђе шыраса тупмалла. Вӑл халӑх творђӗстви формине ҫирӗппӗнтерех ҫавӑрса илсе, ун ӑшне ҫӗнӗ шухӑшсем, ҫӗнӗ кӗвӗсем кӗртмелле,



Ђӑваш писсаттӗлӗсен „Канаш“ сойусӗн 3-мӗш сиесӗ.

Çав вӑхӑтрах хамӑрӑн йатлӑ, паларса çитнӗ писсаттӗлсен происветенисене тӗплӗн вӗренсе тӑрса, вӑл формӑсем патнелле туртӑнса, çывхарса пымалла.

Иккӗмӗш сыпӑкра тӑракан писсаттӗлсем вырӑс клаççӗкӗсемпе тӗплӗн паллашса, вӗсенђен вӗренме те пултараççӗ.

Пӗтӗмӗшпе илсен пирӗн анђах пуçарӑнакан писсаттӗлсен те, паларса çитекенсен те литтераттурӑ тӗлӗшпе вӗреннӗ майӗпех, политтӗк телӗшпе çуталасси çине вирлӗнтерех çаварӑнса пахмалла. Епӗр хамӑр йалӑн тулашӗнђен айаккарах тухса, хамӑр хушӑри ӗçсем хушшинђе ытти ӗçсене кураймасан, хамӑр йал тулашӗнђе мӗнле ӗçсем пулса пынине сӑнама пӗлеймесен, кулленхи пурӑнӑçран айакра тӑрса пырсан, пирӗн литтераттурӑн пултарулӑхӗ те хӗсӗк çул çинђех тӑрса йулма пултарат̆.

(А. Солӑттӑв токлатӗнђен).

Ку сӑмахсем çумне урӑх каламасан та паллӑ пулӗ тетпӗр епӗр. Вӗренесси çинђен сиес та çаплах каласа хӑварђӗ.

**Криттӗккӑ çинђен.** Виççӗмӗш сиес криттӗккӑ çинђен уйрӑм токлат лартса сўтсе-йаврӗ. Малтанхи сиессенђе криттӗккӑ çинђен уйрӑмӑн калаçман, тен ун ђухне криттӗккӑ çинђен калаçма та вӑхӑт пулаймани, мӗншӗн тесен вӑл вӑхӑтсенђе епӗр йепле те пулсан хамӑрӑн орканисатсиленес тесе çуннӑ. Тепӗр йенђен, маланхи икӗ сиессем вӑхӑтӗнђе пирӗн криттӗклемелли литтераттурӑ та питех пулман тесен те йурат̆—ун ђухне епӗр творђӗствӑллӑ литтераттурӑн нумайлӑхӗшӗн тӑрӑшарах параттӑмӑр. Виççӗмӗш сиес тӗлне ку условисем пӑртак улшӑнни паллах — орканисатси ыйтӑвӗсем, пӗтӗмпех пулмасан та вӗсен тӗп никӗсӗсем, хађхи вӑхӑтра пирӗн уççӑнах татӑлса çитнӗ теме пулат̆. Ку пӗр йенђен. Тепӗр йенђен, пирӗн творђӗствӑллӑ литтераттурӑ та хӑйӗн нумайлӑхӗпе те, пахалӑхӗпе те фактӑнах курӑнса тӑрат̆. Çавӑнпа виççӗмӗш сиесра криттӗккӑ çинђен уйрӑм ыйту лартни пит вӑхӑтлӑ йапала пулса тӑни паллах.

Сиес кун пирки çакна каларӗ: Ђӑвашсен творђӗствӑллӑ литтераттури кунран кунах ўссе пырат̆. Хађхи вӑхӑтри литтераттурӑ криттӗккӑна маттерийалсем пама пултарат̆, çавӑнпа криттӗккӑн хӑйне палӑртма, тата вӑйлӑрах ўссе пыма вӑхӑт. Илемлӗ литтераттурӑ тӗрӗс тата авториттетлӑ криттӗккӑсӑр пурӑнма пултараймаст̆, криттӗккӑсӑр вӑл йӑнӑш, ӗçхалӑхне йурӑхсӑр çул çине кӗрсе кайма пултарат̆.

Криттӗккӑ кирли çинђен асӑнсанах, сиес вӑл мӗнле пулмаллине те кӑтартса хӑварђӗ. Сиес кун пирки çапла каларӗ: хађхи вӑхӑтра пирӗн уйрӑм паллӑ криттӗксем çук, вӗсем пулассине сиес шанса тӑрат̆. Анђах епӗр вӗсене кӗтсе тӑма пултараймастпӑр, çавӑнпа криттӗккӑ ӗçне коллективпа тытӑнмалла. Коллективлӑ криттӗккӑ пире, хӑй ӗçне туса пынӑ вӑхӑтрах, уйрӑм вӑйлӑ криттӗксене те палӑртса пыма пултарат̆.

Ку формӑ йенђен. Меттӑт йенђен криттӗккӑ мӗнле пулмаллаши? Кун пирки сиес хӑйӗн татӑклӑ сӑмахне каласа хӑварђӗ. Илемлӗ литтераттурӑ—уйрӑм çынсен ђунне савӑнтармалли йе хурлантармалли йапала кӑна

мар, вăл классен кĕрешĕвĕнђе питĕ вăйлă орути. Пурнăçра хирĕçӳллĕ классем йепле кĕрешсе пыраççĕ, çаван пекех вĕсем итеолоки фронтĕнђе те кĕрешме пăрахмаççĕ. Илемлĕ литтераттурă çак фронтра вĕсене пулăшса пырат̆. Тепĕр йенђен литтераттурăна хăйне çак çапăçура криттĕккă тӳрлетсе, çул кăтартса пырат̆. Çавăнпа та криттĕкка классен кĕрешĕвĕнђи вăхăтра хăйĕн ĕçĕнђе клас ыйтăвсенђен пăрăнса кайма пултараймаст̆. Йепле пулсан та унăн хăйĕн йулашки сăмахне хăй класĕн тĕп шухăшĕпе çыхăнтарса татса калас пулат̆. Классен кĕрешĕвĕнђе епĕр, ĕçлекенсемпе хресђенсем, хамăр тĕп шухăша маркçисăмлă хĕçпăшалпа пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Çавăнпа та сйес кун пирки çапла каларĕ: ђăвашсен илемлĕ литтераттурĕнђи криттĕккă маркçисла криттĕккă пулмалла, çавăнпа кашни криттĕккăх литтераттурăри йавлĕнисене маркçисăмăн тĕп ыйтăвĕсемпе виçсе пăхса пахаламалла, терĕ.

Ку питĕ паллă сăмах. Ăна, криттĕксен кăна мар, пур писсаттĕлсен те йаланах асра тытса тăмалла, мĕншĕн тесен епĕр маркçисăмăн тĕп ыйтăвĕсене пĕр криттĕкленĕ ђух анђах асра тытса, творђĕствăлла ĕç тунă ђухне манăçа хăварса пырсан, малаллах каяймăпăр.

Çапла решшенисем йăшăнђĕ ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен виççĕмĕш сйесĕ творђĕствă ыйтăвĕсем тата ăна çывăх тăракан ыйтусем çинђен. Кĕске статйара ку тĕлĕшпе сйес ыйшăннисене пĕтĕмпех çутатса пама çук, вĕсем нумай. Анђах епĕр, çак çӳлте каланă тĕп решшенисене лайăх ăнланса илсен те, пирĕн çамрăк писсаттĕлсене питĕ усăллă пулĕђђĕ тесе шухăшлатпăр, мĕншĕн тесен вĕсем пирĕн çул çинђе питĕ паллă майаксем.

**Патман.**



Виççĕмĕш сйеса килнĕ ВАПП правленин претставиттĕлĕ Çеливански йулташ.

# Пуçлакансен сăввисем.

## Ђăваш хĕрарăмне.

Ђăваш хĕрарĕм,
Ес мĕн курман-ши?
Пусмăр айĕнђе
Мĕнсем тӳсмен-ши?

Мĕнле асаплă
Хĕнлĕ пурăнăç,
Сапăн ĕмрĕнте
Пулса иртмен-ши?

Ађаранпах ес
Ырлăх курайман
Хĕн-хур айĕнђен
Пĕрт-те тухайман.

Тăвас тенине
Тума май пулман
Ирĕклĕ пурăнăç
Санăн пулайман!

Ӳссе çитсессĕн
Сана ирĕксĕр
Йуратман кађђа
Укçалла сутнă.

Мăшкăлпа тем ђул
Ђăваш арĕмĕ
Вăхăтсăр хăйсен
Пуççене çинĕ.

Хаљ ĕнтĕ ес те
Совет ырлăх-пе,
Çĕнĕ пурăнăç
Тума тытăнтăн.

Мĕнле ĕç тума
Тытăнсассăн-та
Арçынсемпеле
Пĕр танах пултăн.

Çул усăлнă ђух
Ĕçлеме пĕлсен
Çутă пурăнăç
Тума пултарăн.

Ĕçђенлĕхӳпе
Хастарлăхупа
Ес хăвăн йатна
Ђас çутăлтарăн.

**Урукка.**

## Тăлăх пурнăçĕ.

Ирсĕр патша çарĕнђе
Атте вилђĕ вăрçăра.
Таван анне манпађђĕ—
Вăл та вилђĕ хуйхăрса.

Сакăр çула çитсессĕн
Тăрса йултăм тăлăха.
Ревољутси пулађђен
Куртăм çке еп хуйăха.

Вунă çула çитеђђен
Вăрăм пушă сĕтĕртĕм.
Ирхи хĕвел тухађђен
Кĕтӳ кĕтсе çӳреттĕм.

Лекрĕм пуйан аллине
Тар йухтарса ĕçлерĕм.
Укçа парас вырăнне
Ватрĕç айак шăммине.

Хам телейсĕр пулнăшăн,
Вырта-вырта йĕреттĕм;
Атте аса килсессĕн
Вилес патнех çитеттĕм.

Хамăн ĕмĕр тăршшĕнђе
Ырлăх курăп теменђђĕ.
Пусмăр пирĕн хушăран
Тасаласса кĕтменђђĕ.

Ревољутси паттăрăн
Ђуралăха аркатрĕ,
Совет влаçĕ хастарлăн
Тăлăхсене çĕклерĕ.

„Тăлăх туратсен çурђĕ“
Пирĕн йалта усăлђĕ.
Ђуралăхăн сăнђăрĕ
Тин ман çинђен хывăнђĕ.

Çакă çуртра пилĕк çул
Пĕр хуйхăсăр пурăнтăм.
Вунсаккăра çитсессĕн
Унтан çын пулса тухрăм.

Хаљ ирĕкре халăхшăн
Вăйна хурса ĕçлетĕп,
Çĕнĕ пурнăç тăвасшăн
Тĕттĕмлĕхпе кĕрешеп.

**Улитта Ен.**

# ИРТНИПЕ МАЛАШНЕХИ.

## (Ђ. П. П. „Канаш“ сойусĕн Хусанти çексийĕ).

Хусанта литтераттурă крушокĕ пиллĕкĕмĕш çул ĕçлет. Ђăваш писсаттĕлĕсемпе шурналисĕсем «Канаш» сойусĕнђе пĕрлешнĕ хыççăн, 1923 çулта раштав уйĕхĕнђе, Хусанта тĕрлĕ шкулсенђе вĕренекен литераттурăпа интересленекен ђăваш çамрăкĕсем „Канаш“ сойусĕн йађейкки танра пĕрлешрĕç.

Малтанах йађейккă питĕ маттур ĕçлет: ђленĕсем йышлансах пыраççĕ, шурнал тухма пуçлаť. Анђах ђасах тĕрлĕ кăлтăксем (пĕр йенђен — йертсе пыракан орканисатсире пулнă тавл шусем, тепĕр йенђен — йађейккă тĕрекленсе çитейменни) çине пырса такăнмалла пулђĕ. Ĕçлекенсен хàваслăхĕ, пусăрăнаť, йађђейккă ĕçĕтĕксĕмленет. Анђах вăл тĕпĕмпех путланмасť; орканисатси ĕмĕђĕпе шухăшĕ сем нўмайĕшин пуçĕнђе çирĕппĕн лараççĕ. Çаксене кура 925-26 çулта тепĕр хут вăйсене пухма, əçре тунă йăнăшсене пăхса тухма, малашнехи çулсене палăртса хума лекрĕ.

1926 çулта (çулла), «Канаш» сойусĕ ВАПП-па пĕрлешнĕ хыççăн, Хусанти орканисатси хăйĕн оркăнисатсиллĕ принтсипĕсене çĕнĕрен пăхса тухса хăйче Ђ.П.П.А. «Канаш» Сойусĕ çумĕнђе ĕçлесе тăракан крушок тесе малашне унăн пўровĕпə çыхăнса тăрас тесе татса хуђĕ. Ĕç тепĕр хут вăйлăланса, хăпарса кайрĕ. Крушока пĕтĕм ђăваш илемлĕ литтераттурĕпе интересленекен çын-





Ийунĕн 1-мĕшпе 3-мĕш кунĕсем хушшинђе Шупашкарта Ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен «Канаш» сойусĕн 3-мĕш сйесĕ пулса иртрĕ. «Канаш» сойусне кĕрекен литтераттурă крушокĕсем хађхи вăхăтра Хусанта, Уђйанăвскра, Ленинкратра т. ытти хуласенђе те пур. Карттин çинђе: çўлте—Ленинкратри «Канаш» сойус крушокĕн хăшпĕр ђленĕсемпе ђăваш хĕрлĕ салтакĕсенђен Ленинкрат хулин советне суйланнă ђленĕсене ўкернĕ, айалта—«Канаш» сойусĕн Хусанти крушокĕ.

сем кĕђĕç. Халĕ крушокра 23 çын шутланса тăрат̆.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Вĕсенђе ПСК(п)П ђленĕсемпе кантитатсем | | 5 | çын. |
| ПÇЛКС | „ „ | 11 | „ |
| Парттипе комсомолра тăманнисем | | 7 | „ |
| Литтераттурă ĕçне 1917 çултан пуçланисем | | 1 | çын. |
| 1917-20 | „ „ „ | 5 | „ |
| 1921-26 | „ „ „ | 13 | „ |
| Анђах пуçласа тытăннисем . . . . . . . . . | | 4 | „ |

Пухусене ђлента тăманнисем те нумайанах пыраççĕ. Хĕл каçа 12 пуху пулса иртрĕ. Пухура ђленсем çырнă происветенисене вуласа криттĕклесси — крушокăн тĕп ĕçĕ пулса тăђĕ. Ку таранђђен мĕн пурĕ 27 происветени вуласа пăхса тухнă. Кусен хушшинђе пиђете тивĕçлисем те ђылайах, хăшĕ-пĕри çапăннисем те пур.

Мĕн çинђен çыраççĕ? Пуринђен ытла пайанхи кун çинђен. Кунта трактăр кĕмсĕртетни, суха-пуçне ађашшăн пурăнăçран ăсатни, паттăр çамрăксен вирлĕ шухăшĕсем кĕни, Шанхайа саламлани тата ыттисем те, çамрăк писсаттĕлсем тĕрĕс çул çинђе тăраççĕ, хăйсен ушкăнĕнђе вĕсем пĕр-пĕринђен вĕренсе вăйлăланаççĕ, пĕрмайах ӳсеççĕ. Паллах теори ыйтăвĕсемпе пăртак паллашмасăр ĕçлеме кансĕртерех. Ку таранђђен теори токлађĕсем 3 пулнă. Ку тĕлĕшрен малашне те ĕçлеме лекет.

Крушок ђленĕсем хăйсем çырнине пухса пĕр шурнал кăларђĕç. Апрелĕн 2-мĕшĕнђе крушок К. В. Иванова асăнса веђђĕр туса иртterђĕ. Ку веђђĕрта К. И. Комиссаров Иванов пурăнаçĕпе унăн творђђĕстви çинђен каласа пађĕ, йулашкинђен крушок ђленĕсем хăйсен происветенисене вуларĕç. Акă çаксем крушокăн паллăрах ĕçĕсем.

Малалла ĕçе тарăнлатасси — çырма пуçлакансен квалихвикатсине ӳстересси. Ку тĕлĕшрен ĕçлемелли нумай. Крушок хăй йуратса тунине аса илсессĕн — пире нимле йаварлăх та ђарса тăрас çук пек туйăнат̆. Ĕçлесшĕн çунакан ђĕресен вăйĕ питĕ пысăк, вĕсен çулăмне нимĕн те сӳнтереймĕ, нимĕн те тытса ђараймĕ, Ђ.П.П. «Канаш» сойусĕн Хусанти крушокăн кăçалхи ĕçĕсене пăхсан, вăл малалла кайасси курăнсах тăрат̆. Йертсе пыракан оркаписатсисем кăна тĕрĕс çулпа йертсе пыђђăр.

Вара:
«Нумайах кайаймĕ,
Вăхăт çитĕ —
Тăван йурă
Йан йантратĕ».

**Танилăвпа Йехвейккĕн.**

# ЛИНИ НОЂĔСЕМ.

«Сунтал» шурналĕнђе кашни нумĕртех хорпа йурламалли ђăваш йуррисем çапаççĕ. Нођĕсене вĕсене лини нођĕсемпе çырнă. Йалсенђе йурлама ăста çынсем те хăшĕ, ĕлĕкхи шкулсенђе ку нотсене вĕренмен пирки, вĕсене пĕлмеççĕ, ђыхвăр нођĕсене анђах пĕлеççĕ. Нумайĕшĕ лини нотсене ăнлантарса пама ыйтаççĕ. Çавăнпа шурнал ретаксийĕ ђăваш хушшинђе те нотсене пĕлесси сарăлтăр, шурналта çапăнакан йурăсене пур çĕрте те йурлама май пултăр тесе çак нумĕрте лини нођĕсене ăнлантарса панине çапма шухăш тытрĕ.

Мусăк сассисен паллисене ноттă теççĕ. Тĕнђери пур куԓттурлă халăхсем те линисем çинђе çыракан нотсене йышăннă, вăл нотсемпе пур мусăк происветенисене (опперăсене, тĕрлĕ инструментпа каламалли пйессăсене) çырнă. Çавăнпа лини нођĕсем—пур халăхсем пĕлекен мусăк ђĕлхи. Ђыхвăр нођĕсене вырăс пупĕсем тĕне кӳртнĕ ђăвашсене, çармăссене, турă йуррисене йурлама хăвăртрах вĕрентес тесе çырнă. Халĕ ытти халăхсем (çармăссем, вотексем) ђихвăр нотне пăрахрĕç. Пирĕн те ăна пăрахма вăхăт çитнĕ.

Лини нођĕсене хăшĕ вĕренме йывăр теççĕ. Вăл тĕрĕс мар — ăнлантарса парсан лини нотсемпе йурлама çăмăлтарах. Сасă çӳле улăхнине, айала аннине лини нођĕсем ђыхвăрсенђен паллăрах кăтартаççĕ.

Лини нођĕсенђе нотсене лартма 5 лини тăваççĕ, ăна нот станĕ теççĕ. Линисене айалтан пуçласа çӳлелле шутлаççĕ. Натсене линисем çине те, линисем хушшине те лартаççĕ. Çӳлерех лартнă нотсем çӳлереххисем (çинçереххисем) пулаççĕ, айаларах лартнисем — айаларахкисем (хулăнраххисем) пулаççĕ. Самахран, 2-мĕш лини çинђе «соԓ» пулсассăн, 2-мĕшпе 3-мĕш линисем хушшинђе «ԓа» пулат̆. 3-мĕш лини çинђе «çи» пулат̆; айалалла: 1-мĕшпе 2-мĕш хушшинђе «фа», 1-мĕш çинђе «ми» пулат̆. 5-линилĕ нот станĕ II тĕрлĕ нот выранне кăтартма пултарат̆. (1-мĕш ӳкерђĕк).

Сасăсем ытла çӳлерех йе ытла айаларах пулнипе нот станĕнђе шăнăçаймасан, вĕсен ваԓԓи уйрăм хушса хунă лини татăкĕсем кирлĕ таран тăваççĕ. Хушса хунă лини татăкĕсем нот станĕн çийĕнђе те, айĕнђе те пулма пултараççĕ (2-мĕш ӳкерђĕк).

Сасса мĕнђул тăсмаллине (вăрăмĕшне) ноттă мăйсăр патаксăр хăйех кăтартат̆. Хуратман майсăр (патаксăр) çаврашка ноттă 4-мах тăсмаллине кăтартат̆; (пĕр ноттă—целая нота) хуратман мăйлă (патаклă) çаврашка—2 мах (çур ноттă — половинная нота); хуратнă майлă çаврашка—1 мах (ђĕрĕк ноттă — четвертная). Çур мах тăсăлакан саккăрăмĕш ноттăсене (осьмые) хуратнă çаврашкан мăйĕ çумне пĕр хӳре пекки тăваççĕ, йе ноттăсем икĕвиççĕ, йе ытларах çуммăн тăрсан, мăйĕсене пĕрле çӳлтен туртаççĕ. Ђĕрĕк мах тăсăлакан вунултăмĕш нотсене (шестнадцатые) йе мăйĕ çумне икĕ хӳре тăваççĕ, йе мăйĕсене икĕ хут çӳлтен туртаççĕ. (3-мĕш ӳкерђĕке пăх).

Мусăкра сасăсем нумай (ройаԓ çинђе 50 улăштарман сасă). Вĕсем пĕр нот станĕ çине кĕрейменççĕ. Хушса хунă линисемпе те вĕсене пурне те кăтартма май çук— пит нумай линисем хушмалла пулат̆. Çавăнпа пĕр стан çинђех нотсене икĕ тĕрлĕ кăтартаççĕ, мĕнле кăтартнине „çăраççипе“ (ключ) паллă тăваççĕ. Çӳле сасăсем ваԓԓи «купăс çăраççине», йе «соԓ çăраççине» лартаççĕ (скрипичный ключ, ключ соль). Вара нотсен вырăнĕ иккĕмĕш лини çинђе ларакан «соԓ» ноттăран тытăнса кайат̆. Çав «соԓ»—сопранăсем, аԓтсем илекен пĕрремĕш октавăри «соԓ» (тенăрсемшĕн вăл çӳлти «соԓ» пулат̆). (4-мĕш ӳкерђĕке пăх).

Хулăнрах сасăсем ваԓԓи стан çине «пассен çăраççине» (басовый ключ, ключ «фа») лартаççĕ. Кунта вара нотсен хисепĕ 4-мĕш лини çинђе ларакан «фа» нотран тытăнса кайат̆. Çав «фа» — тенăрсемпе пассем илекен кĕçĕн октавăри «фа». (5-мĕш ӳкерђĕке пăх).

Хутăш хор ваԓԓи çырнă ђух сопрансен (тискăнтсен), аԓтсен нођĕсене «соԓ» çăраççипе лартаççĕ, тенăрсен пассен нођĕсене—пас, «фа» çăраççипе лартаççĕ. Тенăр-




сен ваҫҫи, хӑйсене уйрӑм нот станӗ пулсан, «соҫ», ҫӑраҫҫипе те ҫыраҫҫӗ, вара вӑл нотсене кӑтартнинҫе тенӑрсем пӗр октавӑ айаларах йурлаҫҫӗ.

Сасӑсене тийеспа ½ тон ҫӳллетнине, пемоҫпе ½ тон айаллатнине 6-мӗш ӳкерҫӗкри пек тӑваҫҫӗ. Каммӑра тийессем йе пемоҫсем пӗрмайах тӗл пулсан, вӗсене малтанах йӗрке пуҫламӗшӗнҫе ҫӑраҫҫи ҫумне кӑларса лартаҫҫӗ. Вара вӑл сасӑсене йалапах ӑрасна тийес— пемоҫ лартмасӑрах ҫӑраҫҫи ҫумне лартнӑ пек йурламалла. Ун пек йурламалла мар пулсан «пекар» лартаҫҫӗ. (7-мӗш ӳкерҫӗке пӑх).

Нотсен вӑрӑмӑшне тӑсмалла пулсан, йе ҫумне тепӗр ноттӑ лартса ликӑпа ҫыхаҫҫӗ, йе ноттӑ ҫумне пӑнҫӑ лартаҫҫӗ. Пӗр пӑнҫӑ ноттӑ вӑрӑмӗшӗн ҫуррине хушаӗ, иккӗмӗш пӑнҫӑ — ноттӑ вӑрӑмӗшӗн ҫӗрӗкне хушаӗ. (8-мӗш ӳкерҫӗке пӑх).

Лини нотсене авантарах пӗлес тесен ҫак кӗнекене пӑхмалла: С. М. Макҫимӑв—«Ҫӑваш кӗввисем» 1-мӗш пайӗ. Кунта 48-мӗш йенӗнҫе лини ноҫӗсене ҫыхвӑр ноҫӗсемпе танлаштарса кӑтартни пур. Ҫав кӗнеке пур шкулра та пур пулмалла.

**Ҫ. Макҫимӑв.**

# Культурно-общественные взаимоотношения чуваш с соседними народами.

Поволжский край в бытовом и языковом отношениях исследован весьма недостаточно. В особенности мало сделано по вопросу о культурно-общественных взаимоотношениях разных народов, живших и живущих в этом крае. Различные культурно-бытовые связи народов востока Советского Союза восходят к глубокой старине. Следы этих связей отражались на материальной культуре, на бытовом укладе и на языке населения Поволжья. Насущную современную задачу в изучении Поволжского края должно составить трезвое и всестороннее исследование разных культурных влияний, которые были пережиты народами этого края. В выполнении этой задачи дружно и энергично должна вестись работа в областях археологии, этнографии и языковедения. В часности, бытовой уклад жизьни чувашского народа, его материальная культура и язык особенно привлекательны для пытливости исследователя: при этих изучениях должны вскрыться элементы богатой и яркой культуры далекого прошлого,—культуры древних б о л г а р (б у л ґ а р). Староболгарская культура в том виде, в каком она была принесена болгарами в Поволжье и какой получила здесь, в новых местах поселения, представляла в своем составе различные культурные элементы: элементы культуры Средней и Малой Азии и культуры юго-востока Европы. При интенсивной экономической и культурной жизни древние болгары Поволжья приходили в разничные соприкосновения со многими народами, подвергаясь влиянию со стороны одних из этих народов и влияя с своей стороны на другие народы. Для надлежащего понимания духовного облика народа должны быть изучены всесторонне переживания культурного состояния далекого прошлого.

С целью проследить чувашско-русские культурные взаимоотношения я предпринял в сентябре 1921 г. поездку по Чувашской области. Обработка собранного материала с дополнением о культурных взаимоотношениях чуваш и других народов мною была представлена в работе: „Чуваши и их соседи" (см. журнал „Slavia", IV, кн. 1. 1925. Прага). Но издать в полном виде эту работу не удалось. В 1927 г. на ту же тему появилась работа Н. Н Поппе: „Чуваши и их соседи" (Чебоксары). Мы горячо приветствуем появление этой научной работы, лишенной всякой тенденции, не имеющей отношения к науке. Брошюра Поппе излагает, главным образом, результаты, добытые изысканиями мадьярских и финляндских исследователей в области чувашско-финских отношений. Мы ограничимся немногими замечаниями.

1) Н. Н. Поппе характеризует только болгарско-чувашские воздействия на угрофинов. Но для полноты характеристики культурно-языковых переживаний необходимо учесть и те воздействия, которые испытали чуваши со стороны своих соседей,— в частности со стороны татар и русских*).

2) В ведении к своей работе Н. Н. Поппе говорит, что

*) Н. И. А ш м а р и н. Матерiалы для исследования чувашского языка. Стр. V—VII. А. С е л и щ е в. Русские говоры Казанского края и русский язык у чуваш и черемис. (Ученые записки Лингвист. Секции института языковедения и истории литературы. I ).

# ШУРНАЛТА ПУРРИ:

Стр.

1. **Елтиван**—Хурпйаӡ *(очĕрк)* . . . . . . . . . . . . . . . 1.
2. **Неверăв**—Епĕ комуниса хăтарни *(калав)* . . . . . . . . 5.
3. **Шупуççынни**—Йеркĕн (*12 пайлă поемăн 10-мĕш пайĕ*) . . 6.
4. **Хусанккай**—Çирĕм уlттă *(поемă)* . . . . . . . . . . . . 9.
5. **Оççиппăв**—Ылханлă йăх (*трам. йулашки, вĕçĕ*) . . . . . 12.
6. **Патман**—Виççĕмĕш утăм (*ӡăваш пролеттари писсаттĕлĕсен 3-мĕш сйссĕ творӡĕствă çинӡен мĕн калана*) . . . . . . 18.

Стр.

7. **Урукка — Улитта Ен.**—Сăвăсем . . . . . . . . . . . . . . 20.
8. **Танилăвпа Йехвейкин**—Иртнипе малашнехи (*„Канаш“ сойусĕн Хусанти крушок ĕçĕсем)* . . . . . . . . . . . . . . 21.
9. **Макçимăв**—Лини поӡĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 22.
10. Проф. **Селищев**—Культурно-общественные взаимоотношения чуваш с соседними народами . . . . . . . . . . . . . . . 23.
11. **Макçимăв**—Шахмăт пайĕ.

# ШАХМĂТ ПАЙĔ.

**Ретактăрĕ Ç. М. МАКÇИМĂВ**

*(Малалли).*

## Мат тумаллисем.

№ 1.



**2 çўресе мат тумалла.**

Шуррисем пуçлаççĕ.

№ 2.



**4 çўресе мат тумалла.**

Шуррисем пуçлаççĕ.

Çак сатаӡӡăсене тĕрĕс туса çырса йарсан, тĕрĕс тухнисен хушамаӡĕсене «Сунтал» çине çапатпăр.

**„КАНАШПА“ „КАПКĂН“, „СУНТАЛ“**
**КОРЕСПОТЕНӠЕСЕМ.**

**„СУНТАЛА“ ӠĂВАШ ХАЛĂХĔН ПУРНĂÇНЕ КĂТАРТАКАН ФОТОКРАФИ КАРТТИНĔСЕНЕ ЙАРСА ТĂМА ТĂРĂШĂР!**

**„Сунтала“ кĕнĕ карттинсемшĕн „Сунтал“ ретаксийĕ пĕрер тенкĕ укçа тўлет.**

Председатель редколлегии **А. Золотов,**—члены: **Золотов Н.**, **Васильев Н.**, **Криллов Н.**, **Данилов Н.**

Чувашлит № 1861. Заказ № 528. Типо-фотоцинкография школы ФЗУ, Чебоксары. Тираж 2100.

# КАЖДЫЙ

## может получить НЕПОСРЕДСТВЕННО с завода

# ПОЧТОВУЮ ПОСЫЛКУ

### СЛЕДУЮЩИХ СЕРИЙ:

**Серия „А“. Цена 1 р. 50 к.**

Аптечка карманная и дорожная, в изящном футляре. Содержит 21 предмет.

1. Капли Иноземцева.
2. „ мятные.
3. „ эф.-валериановые.
4. „ лондонские.
5. Настойка иода.
6. Спирт нашатырный.
7. Калий марг.-кислый.
8. Пластырь мелилот.
9. „ мозольный.
10. Экстр. каск. сагр.
11. Свинцовый уксус.
12. Сода очищенная.
13. Табл. аспирин 0,5.
14. „ хинин 0,3.
15. Вата гигроскоп.
1. „ кровоостан.
17. Бинты марлевые.
18. Табл. борн. кисл. 0,5.
19. Бумага компрессная.
20. Булавка английская.
21. Пластырь липкий.

**Серия „Б“. Цена 3 рубля.**

Домашняя аптечка. Содержит 24 предмета.

1. Настойка иода.
2. Капли эф.-валериановые.
3. „ нашатырно-анисовые.
4. „ Иноземцева.
5. „ железные.
6. „ датск. короля.
7. „ мятные.
8. Мазь цинковая.
9. „ Вилькинсона.
10. Масло касторовое.
11. „ камфорное.
12. Спирт нашатырный.
13. Мыло зеленое.
15. Сода двууглекислая.
15. Пластырь мелилот.
16. Борная кислота.
17. Вазелин борный.
18. Табл. аспирин 0.5.
19. „ хинин 0,3.
20. Бинт гигроскоп.
21. Вата гигроскоп.
22. Горчичники.
23. Бумага компрессная.
24. Тальк.

**Серия „В“. Цена 5 руб.**

Домашняя аптечка. Содержит 31 предмет.

1. Капли Иноземцева.
2. „ мятные.
3. „ эф.-валериан.
4. „ нашат.-анис.
5. „ ябл. кисл. жел.
6. „ лондонские.
7. Настойка иода.
8. Спирт камфорный.
9. „ нашатырный.
10. Масло камфорное.
11. „ касторовое.
12. Пластырь мелилот.
13. „ мозольный.
14. Глицерин.
15. Калий марг.-кислый.
16. Борная кислота.
17. Сода очищенная.
18. Вата гигроскоп.
19. „ кровоостан.
20. Табл. аспирин 0,5.
21. „ хинин 0,3.
22. Вазелин борный.
23. Каранд. мигренев.
24. Бинт марлев.
25. Марля гигроскоп.
26. Горчичники.
27. Бумага компрессная.
28. Булавка английская.
29. Мазь цинковая.
30. „ Вилькинсона.
31. Мыло зеленое.

**Высылается НЕМЕДЛЕННО наложенным платежом без задатка. При получении ПОЛНОЙ СТОИМОСТИ ВПЕРЕД — упаковка и пересылка БЕСПЛАТНО.**

Деньги просим пересылать почтовыми переводами, отнюдь не вкладывая денег или марок в письма, последнее противоречит почтовым правилам и полагается к конфискации.

Высылается только то, что указано в объявлениях по сериям. Никакие добавления и изменения НЕ ДОПУСКАЮТСЯ.

В заказе точно указывать адрес почтового отделения, где принимаются посылки.

**С адресом „ДО ВОСТРЕБОВАНИЯ“ — НЕ ВЫСЫЛАЕМ.**

Неоплаченные почтовыми марками письма ЗАВОДОМ НЕ ПРИНИМАЮТСЯ.

**Адрес и фамилию писать ЯСНО И ОТЧЕТЛИВО.**

**Государственный Химико-Фармацевтический завод им. Н. А. СЕМАШКО. Москва, Тулинская ул., 15 — Отдел посылок № 70. Адрес для телеграмм МОСКВА—ПРЕПАРАТОР.**